2006-862

Ерагин Е.Е.



# КУÇМА ПАЙРАШ
## ÇЫРАВÇĂ-ВРАЧ

Чăваш халăх академийĕ

«Чăваш сăмахлăхĕн ăстисем» ярăм

Е.Е.ЕРАГИН

# КУÇМА ПАЙРАШ
## ÇЫРАВÇĂ-ВРАЧ

Шупашкар
«Çĕнĕ вăхăт» издательство
2006

УДК 821.512.111.0
ББК 83.3 (2 Рос-Чув)
Е 69

РГУ "Госархив печати Чувашии"
Минкультуры Чувашии
Обязательный бесплатный экземпляр
"28" ноября 2006
№ 452

Пичете Чăваш халăх академийĕн комиссийĕ 2.11.2006 сĕннĕ

**Кĕнекене кăларма Чăваш Республикин пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министерствин патшалăх предприяти-учреждениййĕсемпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ Пайраш Валентина Петровна пулăшнă.**

**Кĕнекен тишкерӳçĕ-хаклавçисем:**

Чăваш халăх академийĕн вице-президенчĕ, Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн пай пуçлăхĕ, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ В.П.Станъял халăх ăсчахĕ.

И.Н.Ульянов яч. Чăваш патшалăх университечĕн журналистика факультечĕн деканĕ, истори ăслăлăхĕсен кандидачĕ А.П.Данилов профессор.

Ерагин Е.Е.
Е69 Куçма Пайраш çыравçă-врач. – Шупашкар: «Çĕнĕ вăхăт», 2006. – 52 с.

Куçма Пайраш (1906-1974) – паллă çыравçă, талантлă врач-уролог. ЧР Муркаш районĕнчи Вускасси ялĕнче çуралса ӳснĕ, Шупашкарта ĕçлесе пурăннă. Кĕнекене, Республикăри ăс-хакăл çулталăкне палăртнă май, пултаруллă çыравçă-врач 100 çул тултарнине халаллană.

© Ерагин Е.Е., 2006
© Чувашская народная академия

# Вускасси – Акуча ялĕ

Хутсем çинче яла Вускасси тесе уйăрма 18 ĕм. кăна пуçланă, 19 ĕм. вĕçĕнче вăл тулли уйрăм ял шутланать. Унччен Вускасси Акуча ялне кĕнĕ, халь ĕнтĕ Акуча тăрăхĕнчи ял шутланать. Акуча тенине вырăсла, пач авал – тутарла, Байрашево тенĕ. 19 ĕм. хутсем çинче Вускассине «Старое Байрашево», Иштереккассине «Большое Байрашево» тенисем те пур. 18 ĕм., унччен те, Акуча (е «Первое Байрашево») Кĕнер вулăсне кĕнĕ, унтах Экрем, Чорачăк, Янăш т.ыт. кĕнĕ. «Второе Байрашево» (Кокшанар çырми пуçĕнчи Çеçмер, Шор Пайраш т.ыт.) тени те кунтах пулнă. Кĕнер ялĕсем (Çӳлтикасси, Яраккасси, Катькасси, Шомик т.ыт.) Тăрăн вулăсĕнче шутланнă[1].

1781 ç. Акучара 296 ят (хырçă тӳлеме палăртнă арçын) шутланнă[2]. 18 ĕм. вĕçĕнче кунта 374 арçынпа 304 хĕрарăм пурăннă, Вускасси-Иштереккассинче пĕрле 42 кил, Анатри Томлайра 14 кил, Тури Томлайра 22 кил пулнă[3]. Чиркӳ йĕркипе акучасем Шорча прихутне кĕнĕ, Вускассинче унта 12 çухрăм. Акучасен çĕрĕсем Покшаш тăрăхĕнче те, Отăра та, Йăлăмра та, Анат Кĕнер, Тури Кĕнер тата Чорачăк ялĕсемпе пĕрле пулнă. 1859 ç. Акуча тăрăхĕнчи Вускассинче (ăна Акуча ялĕн тĕп касĕ тесе палăртнă) 21 кил пулнă, Иштереккассинче – 42 кил, Анатри Томлайра – 23 кил, Тури Томлайра – 21 кил, Сăпайкассинче – 28 кил, Нӳреткассинче – 6 кил (кăна 1900 ç. Яраккасси енчен Киреметъойне куçарса Вускассипе пĕрлештернĕ)[4]. 1927 çулччен Вускасси Сĕнтĕр вулăсне кĕнĕ, унăн центрне, Ишлее, çитме 15 çухрăма яхăн пулнă, çывăхри пысăк шкула, Çӳлтикассине, çитме – 5 çухрăм. Вускассипе Яраккасси хушшипе пысăк Йăлăм çолĕ выртнă, ун тăрăх акучасем çеç мар, экремсем те, очăкассисем те, хăшпĕр чорачăксем те Атăл хĕрне, Отăна, Йăлăма çӳренĕ, хĕлĕн-çĕвĕн урапа-çуна сасси тăнă. Чикхошши урлă, Пайраш-Садиковсем çумĕнчех ку çул патне пысăк çирĕп кĕпер хывнă пулнă, тĕп кĕперĕ Нӳрек тĕлĕнче пулнă. Вускассинчен Атăл хĕрне (Кĕнерварринe) – 10 çухрăм.

Авалтарах Вускасси ялĕ сапаланчăк пулнă. Пӳртсем Анатъкокрта, Турикасра, Çатраккассинче, Вăрманкассинче (йĕтем пулнă вырăнта) Кипӳртре (халь унта дачăсем) ларнă.



1952–1953 çç., çимĕк. Малта ачисемпе Иванов Петрпе Ланцев Кĕркори арăмĕсем ларaççĕ.

20 ĕм. пуçламăшĕнче кăна вĕсем пĕр Вускассипе пĕрлешнĕ. Хорăнçол çине вускассисем Чĕмпĕр çолĕпе тухнă, Чĕмпĕр çолĕ çине вара Риккассипе Эхветь хушшинче тухнă. Çав çул юппинче, ĕлĕк аслă çул туррине асăннă вырăнта, Сатюх часовни пулнă (ăна К.И.Пайраш пиччĕшĕ Садиков Никита Яковлевич кирпĕчрен купаласа тунă-мĕн)[5].

Ялти хурал пӳрчĕ 20 ĕм. варричченех Анатъкокрпа Турикокр кĕтессинче, хальхи шыв колонкинчен инçех мар ларнă, Куçма Ильич килĕнчен икĕ кил урлă хурал пӳртне хирĕçех, Турикасран килнĕ çĕрте, Тимохха (унăн пилĕк ывăл тетчĕç-и) пуранна. Ырă кăмăллă, йăваш чăваш. Çавна пĕрре хурал пӳртне пухăннă арçынсем калаççĕ: «Эсĕ арăмна пĕрре те хĕнеместĕн пуль – вăл питĕ хитре, пĕр кăвак, пĕр пĕркеленчĕк çук». Ку вара çынсенчен юлас мар тесе сасă пултăр тет. Арăмне кĕрĕк тăхăнтартать те хытă кăçкăрма-çухăрма ыйтать. Сарайне илсе тухать, эх çапать тет арăмне кĕлтепе. Арăмĕ янрататъ кăна тата... Кайран çав çынсемех Тимоххана: «Ме арăмна унашкалах хĕнен-ара?» – теççĕ тет[6].



Вускассинчи мăнкон эрни, 1950-мĕш çç., Сентри Митрисен çумĕнче. Айккинче Репкова Зоя тăрать, йывăç патĕнчех – Ланцева Люба, чуччу çинче – Шишкина Зина. Пайраш Ю.К. сăнӳкерчĕкĕ.

1910 çул тĕлĕнче ялйыш тăварсăр аптранă, ниçта та ытлах сутман пулмалла. Хурал пӳрчĕ умĕнче яш-кĕрĕм ларнă. Çав вăхăтра вĕсем патĕнчен ялти вăйлă суеçĕ Шипирти Çтаппанĕ иртсе пынă. Кусем хайхи: «Çтаппан пичи, мĕн те полин чăсса кăтарт-ха». Лешĕ, «Ста унта серпе чăсса ларма, Ишлея, ав, тăвар килнĕ, тăвар патне каймалла», – тесе васкавлă килнелле утать. Кĕç-вĕç çамрăксемпе ача-пăча саланса пĕтет. Çав каçах хăшпĕрисем лашасем кӳлсе вулăса çул тытнă. Çула май кусене курса иштерексем, сăпайсем, томлайсем, олкашсем кӳлĕнсе тухнă. Лере вара илтмен те[7]...

1920-ш çç. Вускассинче комсомол сасси янрама тытăнать. Хурал пӳртĕнче политика литератури вуланать. 1925 ç. май тĕлне унта «Новая деревня» хаçат та килсе тăнă. Ялта ун чух 169 çын пурăннă, 7 арçыначапа 2 хĕрача шкула çӳренĕ[8]. Çак вăхăтра акучасен центрĕ Сăпайкассине куçать, кунта комсомолецсем «Çиçĕм» стена хаçачĕ те кăларнă. Комсомолецсен (ячейки 14.07.1923 йĕркеленнĕ) ертӳçи Кудряшов



1973 ç. март. Квасов В.С. туйĕнчи пĕр самант.

Василий Васильевич пулнă. Колхозсем тунă чух вĕсем уйрăмах пысăк хастарлăх кăтартаççĕ[9].

Вускассинче колхоз тăвассишĕн Турикасри Чăмак Васли (кайран Шашкара киле кĕнĕ), Квас Элексантăрĕ т.ыт. тăрăшнă. Малтанхи колхозниксен шутĕнче Кожевников Ляванттие, Шерстяков Васлие асăнаççĕ. Пухăнасса вĕсем Пятков Çтаппанĕ патĕнче пухăннă. Колхоза «Трактор» ят панă, вăрçă хыççăнхи ячĕ – «9 мая». Колхозне пуçламăшĕнче аякран килнĕ 16 çулхи ача ертсе пынă[10].

Иртнĕ вăрçăран вускассисен 20 арçын таврăнайман.

1920-1960 çç. Вускасси-Акуча Куçма Пайраш ятне-сумне пула чăваш культури çыннисем хушшинче самаях паллă ял пулса тăрать. Республика тĕп хулинчен инçех мар (30 çухрăма яхăн) тата Мăнçол çывăхĕнче (пĕр çухрăм) пулнăран кунта çÿреме те меллĕ пулнă. Кузьма Ильич ĕçтешĕсем – Шупашкар хирургĕсем – яла канма та килнĕ (1950-1960 çç). Уйрăмах тăван сăмахлăх хастарĕсем Вускассинче пулса хавхаланнă. Паллă журналист-калавçăпа, кайран тата сумлă тухтăр пулнăран та пуль, Николай Айзман (1905-1967), Никифор Васанкка (1903-1976), Аркадий Золотов (1901-



«Дружба» колхозӑн ӗҫпе юрӑ уявӗнче (Аттӑршни вӑрманӗ, 1984 ҫ.).

1942), Исаев Мӗтри (1905-1930), Степан Лашман (1895-1986), Иван Мучи (1895-1946), Петр Осипов (1900-1987), Илле Тукташ (1907-1957), Хумма Ҫеменӗ (1903-1936), Петӗр Хусанкай (1907-1970), Куҫма Чулкаҫ (1907-1971) т.ыт. тачӑ хутшӑнура пулнӑ[11].

1946 ҫултах ҫулла кунта Хветӗр Уяр килет, вӑл вӑрҫӑран малтанах аманса таврӑннӑ. Кунти халап-сӑмахпа хавхаланса «Шурча таврашӗнче» роман ҫырма пуҫлать. Шупашкарта литература музейӗнче Куҫма Пайраш ун патне ҫартан янӑ ҫырӑвӗ (12.04.1943, 19822 ҫар почти адресӗпе) те упранать. Ҫырура пирӗн ентеш тӑван литературӑпа, ӑс-хакӑл пурнӑҫӗпе самаях кӑсӑкланни курӑнать[12]. Ҫырупа пӗрле музейре ҫыравҫӑн Юрий ывӑлӗ панӑ Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗ (711069 №), «Готов к санитарной обороне СССР» паллӑ, тӑватӑ медалӗ упранаҫҫӗ.

Пӗррехинче пӗр ҫыравҫӑ умӗнчех Турикасри Шишкин Петӗр Ҫимонӗ ҫат хуҫнӑ пирки калаҫнӑ, «Нивушлӗ ҫыннӑн путти похӑннипе корпун хӑпарса каят?» Кузьма Ильич вара ӑна ӑнлантарма пикеннӗ. Лешӗ: «Ненай, ҫынсем ҫапла калаччӗ те...»



Вускасси, 30.05.1954, Турикокр хыҫӗнче (ӗне-пӑру ферми, хыҫҫӑн пилорама вырӑнӗнче). Илле Тукташпа Ком Сойӑи ял тавралӑхӗпе паллашнӑ хыҫҫӑн[12а].

Кунта килнӗ ҫыравҫӑсем ял тӑрӑхӗпе паллашма та кӑмӑлланӑ: Ятмас олӑхне тухнӑ, Яраккасси енне каҫнӑ; Ҫулавар тӑрӑх ҫӳренӗ, ҫула май Тури ҫӑлтан шыв ӗҫнӗ, Молкачӑ енчи Олӑп тӑпри патнех ҫитсе килнӗ, Е.Е.Горшковӑн пулнӑ Анатри арман патне те кайса курнӑ... Л.Я.Агаковпа (1910-1977) юлташӗсем Пайрашсем патне час-часах кӗрсе тухнӑ. Эх, юрлатчӗҫ тет вара. Унӑн хунькассине, ҫыравҫӑ-арӑмӗн Александра Лазареван (1917-1978, 13 кӗнеке ҫырнӑ) тӑван ялне, Акучари Тури Томлая каякан ҫулӗ вӗсем патӗнчен иртсе кайнӑ... Садиковсем патне тӗрлӗ хӑнасем килсен килӗ-тӑванӗнчи ҫамрӑкраххисем ятарласа ялӑйыша, ытти тӑванӗсене йыхравланӑ[13]. Кунта ҫӳренӗ тӑван культура ӗҫченӗсен витӗмӗпе те пулмалла Нӳрек ураменчи Анатолий Ермолаевич Горшков (1931 ҫ.) филологи ӑслӑлӑхӗсен кандидачӗ, паллӑ чӗлхеҫӗ пулса тӑнӑ, унӑн кӳрши Аверкий Петрович Кириллов та экономика ӑслӑлӑхӗсен кандидачӗ, Сӑпайкассинчи Иван Григорьев (1924-1979) – журналист, ҫыравҫӑ, 12 кӗнеке авторӗ.

## Вускассинчи Садиковсен (Сатюхха) ăратти

19 ĕмĕрте Сатюхха кил выранĕсем Анаткокрта çырма хĕрринче пулни паллă. Вĕсен çăлĕ (Сатюх çăлĕ) Чикъхошшинчи тепĕр енче пулнă. Ялйыш унтан 1980-ш çулсемченех шыв ăснă. Сатюх Яккăвĕ 1840-ш çç. таврашĕнче çуралнă. Унăн виçĕ ача çитĕннĕ: Натюши, Илле тата Микит. Якку Микит аякка вĕренме кайсан вилнĕ.

Кӳршĕри Маккар (Окçни ашшĕ) Яккупа туслă пулнă. Якку виличчен: «Макар, манăн Микита вĕренмелĕх сарай çонаттинче путарса хорни пор, эп вилсен çавна ула пар». Кĕçех вилет. Микиш таврăнсан Макар ăна каланă вырăна кăтартать. Унта ылтăн муклашки выртнă иккен. Ун пек пурлăхпа ним тума пĕлменнипе Микит ылтăна Çӳлтикассинчи Натюшие кайса парать... Аккăшĕсем вара ăна та хура сăхман, кăвак ăйăр туянса панă.

Натюши (Надежда Яковлевна) Çӳлтикассинчи Кариша качча кайнă пулнă, тĕреклĕ пурăннă. Унăн ачи-мăнукĕ (Ефимовсем) чиркĕ урамĕнче тĕпленнĕ. Ачисем: 1) Еххĕм (ун ачисем вара: Васли, аякри Корнавăшра тĕпленнĕ, Витали, 1935 ç.ç., Отатти, Çĕнъял Илпеше к.к.), 2) Элексантăр (ывăлĕ Васли учительте ĕçленĕ), 3) Соня (Иштерекри Мамаев Иванне к.к.), 4) Варвари Сӳтĕккассине к.к. (ачисем: Анна, Онисси). Колхозсем чухне Ефимовсем хур курнă: пӳртне туртса илнĕ те шкул тунă, хăйсене килхушшине те кĕртмен, картинче хăмаран çапса тунă будкăра пурăнма тивнĕ, çавах тăван çурт çумне тепĕр хут пӳрт лартма вăй çитерне[14].

Илья Яковлевич арăмне Риккассинчен илнĕ. 1918 çулта вăл ялти чухăнсен комитечĕн ертӳçи пулнă. 1920-ш çç. хуçалăхне самаях тĕреклетнĕ, çавна май кулаксене пĕтернĕ чухне ăна та тустарма пуçланă, сарайĕсене илсе тухса кайнă. Çапах та Куçма ывăлĕпе кинĕ тăрăшнипе репрессирен хăтăлнă. Вăл 1937 ç. вилет, уншăн кĕçĕн ывăлĕ питĕ хуйхăрнă, куççульне те пытарман. Кузьма Ильич ашшĕне анкартине пытарасшăн пулать. Çапах, ялйыш хистенипе ăна акучасен Олпут ойĕнчи çăви çинех пытараççĕ[15].

Илле ачисем: Михали: Тари (Татьок – ?), Аньок, Окçни, Куçма. Михали, шухăскер, ямшăкра çӳренĕ. Пĕррехинче, пĕр хĕр патĕнче чух, сивĕ шыв ĕçсе лартнипе чирлесе

каять, вилет. Авланма ёлкĕреймен. Час-часах Куçма шăллĕне, пурăнма пĕлместĕн, тесе ятланă.

Тари Тури Томлайри Воронцов Митрине качча кайнă. Ачисем: 1) Иван (вăрçăра вилнĕ), 2) Васли, 3) Праски (Пошкара качча кайнă, 2 ывăл), 4) Зоя (вăрçа хутшăннă, тĕп килте пурăннă, 2004 ç.в.), 5) Хетеç (ывăлĕ Ваня, унăн арăмĕ тĕп киле юлнă). Воронцовсен таврашĕнчи Юрий Иванович, 1943 ç.ç., паллă инженер-конструктор, Чăваш патшалăх университечĕн машиностроительнăй факультет доценчĕ. Ялйышра вĕсен Васли ывăлĕ (1918 ç.ç.) пирки асăнаççĕ, çемçе кăмăллă, лайăх çын пулнă теççĕ. Вăл Ишлейре 10 класс пĕтернĕскер, нимĕçле самаях чухланă-мĕн. Вăрçăра, тыткăна лексен, нимĕçсем ăна лагерьте тăлмач туса хунă-мĕн. Çав лагерех кӳршĕ Олкаш ялĕнчи унпа тантăшлăрах салтак та лекнĕ пулнă: «Васли, мана çăлăнса тохма полăшсам ара», – тенĕ. Васли ăна пулăшайман... 1956 ç. çаксем ăнсăртран Шупашкарта Симĕс пасарта, лăп милици çурчĕ умĕнчех тĕл пулаççĕ. Калаçкаласа уйрăлнă хыççăн... Васли темиçе çул тĕрмере ларнă. Унтан тухсан темиçе çултанах тата хăйсен ялĕнчи пĕр çын, Осăп, тем сăлтавпа ăна çапса вĕлернĕ; виллине тепĕр 18 кунтан тин пĕр çырма хĕрринче тупнă[16].



Садиков Илья Яковлевич, 26.12.1926.

Иллен тепĕр хĕрĕ, Окçни, Ахманяна к.к. Тата тепĕр хĕрĕ, Аньок, качча кайман, тĕп килте юлнă. Шупашкара куçнă Куçма шăллĕ, ăна йĕр-



Кузьма Ильич Пайраш (варринче), мăшăрĕ Рона Ивановна тата ывăлĕ Юрий. 1958 ç., март.

келлĕ пăхса пурăнччăр, тесе тăван кил-çуртне ялти бригадирта ĕçленĕ Г.П.Кожевников çемйине парнелет. Прохвăркришкисем шурă кирпĕч çурт лартсан Пайрашсен пӳртне хирĕçлерех кӳршĕри Шишкин Александр Петрович (1914-1996) туянать, юсаса çурт лартать. Вăл пӳртре халĕ те пурăнаççĕ.

Илле Яковлевичăн кĕçĕн ывăлĕ Куçма (1906-1974), ятне çуралнă кунĕ чиркӳсен Куçминкка уявĕпе пĕр килнĕрен панă, паллă тухтăр тата çыравçă пулса тăнă. Унăн хайлавĕсем республикăри хаçат-журналта, пĕрлехи литература кăларăмĕсенче 20 ĕмĕрте тăтăшах пичетленнĕ. Кузьма Ильич пуçламăш шкул хыççăн Çӳлтикассинчи тулли мар вăтам шкулта вĕреннĕ (тепĕр икĕ çул). Çамрăклах тăван Сĕнтĕр вулăсĕнчи комсомол ĕçне явăçнă. Хыççăн, 1924 çулта, çулталăк ытла вулăс центрĕнче, Ишлейре ĕçленĕ. 1925-1927 çулсенче Шупашкарти совпартшкулта вĕреннĕ, çав хушăрах, хыççăн та, чăваш хаçат редакцийĕсенче ĕçленĕ. 1929-1933 çулсенче Мускаври Н.И.Пирогов ячĕллĕ 1-ш медицина институтĕн терапии уйрăмĕнче вĕреннĕ.

1933-1936 çç. вăл Мăн Сĕнтĕр (Тутаркас район центрĕ) сыватăшĕнче ĕçлет, çав вăхăтрах райĕçтăвкомăн сывлăха

сыхлас ĕç пайĕн ертÿçи те пулнă[18]. 1936-1941 çç. Шупашкарти 1-ш хула сыватăшĕн хирургĕ тата рентгенологĕнче ĕçленĕ. Вăрçă вăхăтĕнче Садиков К.И. капитан Инçет Хĕвелтухăçĕнчи куçса çÿрекен госпитале ертсе пынă. 1945 ç. август-сентябрьте унти 2-ш фронтпа Япони çарне аркатнă çĕре хутшăннă. Çартан таврăнсан, 1946-1953 çç. республикăри МВД-КГБ тытăмĕн сыватăшĕнче ĕçлет. Ленинградра урологсен курсĕсенче вĕреннĕ (1953 ç. май-август) хыççăн 1953-1974 çç. республика сыватăшĕн урологи уйрăмне ертсе пынă. Хирургин çак енĕ Шупашкарта вăл пуçарнипе йĕркеленнĕ, вăлах унта республикăри тĕп специалист пулнă. Шÿтлеме юратакан çыравçăсем çавна май унтан сăвăласа та тăрăхланă-мĕн:

Çара кут кашни майрашăн<br>
Ответ тытма тивет Пайрашăн...

Хăй вăхăтĕнче Куçма Пайраш Чăвашъенче чи паллă тухтăрсенчен пĕри шутланнă. Вăл «тава тивĕçлĕ врач» ятне, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденне т.ыт. наградăсене тивĕçнĕ. Тĕрлĕ



Вускасси, Анатъкокр, 1975 ç.: Садиков В.В. (1954 ç.ç.): Садикова Мария Никитична, Пайраш Матрена Ивановна, Мария хĕрĕсем Зоя тата Антонина, вĕсем хыçĕнче кĕрÿшĕ Скворцов В.В., хĕрринче çыравçă вырăнĕнче пурăнакан Прохвăр-Кришкă арăмĕ.

çĕрте халĕ те Кузьма Ильич хăйсене сипленине, пĕр-пĕр операци тунине ырăпа асăнаççĕ. Çав вăхăтрах вăл çывăх çынсене, тăванĕсемпе юлташĕсене (сăмахран, тăван ялĕнчи Кожевников Лявантти хăй вăхăтĕнче аса илнĕ тăрăх) сыватнă çĕре хутшăнма кăмăлласах кайман, йăнăшасран шикленетĕп, тенĕ. Пултарулăхĕнче вара вăл хăйсен енчи ĕç-пуçа, çыннисене самаях сăнарланă, тепĕр чух пайăр ятсене (Шишкин, Тетерин, Орлов, «Правда» колхоз, Акуча т.ыт.те) улăштарман.



СПРАВКА

Даю настоящую справку в том, что когда я работал председателем Татаркасинского (ныне Моргаушского) района Чувашской АССР т. Миронова Матрена Ивановна, ныне Пайраш как член РК партии принимала активное участие в хозяйственно-политических кампаниях по раскулачиванию и коллективизации в селениях и особенно по выселению кулаков из Оринииского сельсовета.

Это подтверждаю потому, что я в то время работал председателем Райисполкома Татаркасинского района и членом бюро Райкома партии.

В чем и расписываюсь: (А.ЛЬВОВ)

17 мая 1974 г.
г. Чебоксары.

Верно: Секретарь партбюро
Союза писателей Чувашской АССР

(Г.КРАСНОВ)

Унăн арăмĕ, Матрена Ивановна Пайраш (1904-1979), Куславкка районĕнчен пулнă, тутарла та пĕлнĕ, 1925 ç. Тĕп Чăваш педтехникумĕнчен (3-мĕш кăларăм), вĕренсе тухнă хыççăн совпаршкулта истори учительне вĕреннĕ, хыççăн НКВД тытăмĕнче ĕçленĕ. Хăйне Рона тесе чĕнтернĕ. Колхозсем тунă вăхăтра вăл Тутаркас районĕнче палăрнă. Пайрашсем пĕр ывăл (Юрий, 1929-2005) çитĕнтернĕ. Вăл 1952 ç. Чулхулари политехника институне пĕтернĕ, ЗЭИМ-ра инженерта ĕçленĕ, арăмĕ, Татьяна Петровна (1932-1994), Саратовран ЧЭАЗ инженерĕ пулнă; ачисем Миша тата Саша. Çыравçă хваттерĕнче (Шупашкар, Ленин пр., 11 çурт, 18 хв.; вăл çуртрах А.Алка сăвăç (1913-1977) пурăннă, халь мăнукĕн М.Ю.Пайраш çемйи пурăнать. Михаил Юрьевич, 1958 ç.ç., химфак пĕтернĕ, ЧЭАЗ-ра ĕçлет, мăшăрĕпе Валентина Петровнăпа пĕр ывăл, Константин, 1987 ç.ç., çитĕнтерет. Александр Юрьевич, 1961 ç.ç., СЭС-ри инженер-электирк, мăшăрĕпе Татьяна Николаевнăпа пĕр ывăл, Федор, 1999 ç.ç., çитĕнтерет.

Аслă Пайрашсене Шупашкарти Кăкшăм шывĕ, ботаника сачĕ çумĕнчи Кивĕ çăва çине пытарнă. Çыравçă-врач çумнех



Пайрашсен тепӗр ӑрӑвӗ, 1988 ç. Çыравçӑ мӑнукӗ Михаил Юрьевич Пайраш хӑйӗн çемйипе.

виçӗ кун малтан унӑн аслӑ юлташне, Кузнецов Игнат Кузьмич хирурга, пытарнӑ пулнӑ. Тепӗр енче ялхуçалӑх министрӗ пулнӑ Малов Николай Гаврилович (1906-1974) выртать. Вускассинчи Садиковсем кунта хурлӑхансем, хурӑн лартса хӑварнӑ. Кузьма Ильич вилтӑпри çине палӑк лартма çав çулах (29.07.1974) арӑмӗ СССР-ӑн Чӑвашъенчи литфондӗнчен çӗр тенкӗ ыйтнӑ[20].

Микит (Никита Яковлевич) учитель пулнӑ. Кӗçӗнни пулин те кӳршӗри, çырма хӗрринчех, мӑнаккӑшӗн кил вырӑнне уйрӑлса тухать. Ашшӗсем пулӑшнипе тем пысӑкӑш (20 м ытла тӑршшӗ), темиçе пӳлӗмлӗ çурт лартать. Унта шкул уçать, ялти ачасене хӑех вӗрентет. 1920-ш çç. вӗçнелле акучасем валли шкул Сӑпайкассинче йӗркеленӗрен вӑл хупӑнать. 1920 çç. Микит çуртӗнче час-часах тӗрлӗ пухусем иртнӗ. Арӑмӗ (Шопашкаркассинчен, Пайманова Татьяна Никитична, 1960 ç.ç. варринче 99 çула çитсе вилнӗ) шкул ачисем хыççӑн, пухусем хыççӑн та, самаях урай шӑлса хӑшкӑлнӑ. Çуртӑн аялти хутӗнче кил хуçисен лавкка пулнӑ, хыççӑн

унта ёнесем тытнӑ. 1940 ç.ç. ку çурта пӗчӗклетнӗ, вӑл халь те ларать. Шкул ачисем кунта çӳреме пӑрахсан Микитсен сарайӗнче шкул хатӗрӗсем, доскасем чылайччен выртнӑ. Вӑрçӑ вӑхӑтӗнче вӗсене кӑмакана хутса пӗтернӗ.

Микит ачисем: 1) Мари (тӑван килтех пурӑнса вилнӗ, Оленов Николай Васильевича, Ланцов Ваçли вырӑнӗнче пурӑннӑскере, к.к.; упӑшки вӑрçӑ хыççӑн вилнӗ, Капӑр Анна, Турикасри Иван арӑмӗ, тухатнӑ тет-и), 2) Хетори (Çӳлтикассинчи Разумова к.к.), 3) Николай (вунçиччӗрех Нӳрек çӑлне анса кайнӑ, ёнине кӑларма тӑнӑ чух шӑнса вилнӗ; çак инкекпе халсӑр пулнӑ тӑванӗ Куçма – çавӑн хыççӑн ёнтӗ тухтӑр пулма тупа тунӑ пулать). Мари ачисем: Зоя (1929 ç.ç., ывӑлӗ Веча, 1954 ç.ç., тӗп киле пурӑнма юлнӑ), Георгий (1934-2000, çемйипе Донбасра пурӑннӑ), Тоня (1942 ç.ç., Тури Томлайри Скворцов Владимир Васильевича к.к., ывӑлӗ Саша). Хетори ачисем: Отатти (амӑшӗ вырӑнӗнче пурӑнма юлнӑ, ывӑлӗсем: Коля, Броня), Всеволод (1929 ç.ç.), аякра пулӑ тытнӑ çӗрте ёçленӗ), Володя.

Никита Яковлевич Садиков синкерлӗ вилнӗ. Вӑл Карямала, арман авӑртма кайнӑ пулнӑ. Яраккассипе таврӑннӑ чухне чӑрсӑр Шӑрпӑк Емеленӗ (1906-1940, килӗнче ёскӗ пынӑ) чӗнсе кӗртет. «Эсӗ вырӑсла лайӑх пӗлетӗн, нуккӑ, пире прикӑвӑр çырса пар-ха», – теççӗ çакна. Ытахальтен, Емелен киле кӗнӗ вырӑнтан инçех мар Микит хӑйматлӑхӗ Клопов Иван Сергеевич (1879-1953) пурӑннӑ. Отӑри улӑхсем пирки çырмалла пулнӑ. Сӗмсӗрсене Микит çырни килӗшсех каймасть, килхуçи хӑнасем пулӑшнипе Микита вилмеллех хӗнет. Кайран тахӑшӗ Вускассине кайса: «Михти Яккӑлччӑ Емеленсем патӗнче ёссӗр вуртат», – тет. Килне илсе килсен те вили милици-суд йышӑнӑвӗсене кӗтмелле пулнӑ пирки икӗ эрне выртать[21].

## Кусма Пайраш çинчен

К.И.Пайраш ĕçĕ-хĕлне хăй вăхăтĕнче те асăрхаймасăр тăрайман. Сывлăха упрас, сиплес ĕçре ăна хакланă, яланах лайăх характеристикăсем çырнă. Çарта та вăл пултаруллă пулнă, килте, ялйышра, тăванĕ-юлташĕ хушшинче ырă кăмăллă, йăваш çын. Тăван сăмахлăхри пултарулăхне вара уйрăмах тишкернĕ, тĕпченĕ.

**Чăваш халăх çыравçи Илпек Микулайĕ (1956 ç.):**

«Кузьма Пайраш хамăрăн пурнăçра пулса иртекен ĕçсем çинчен тĕплĕн асăрхаса пысăк пултарулăхпа çырать. Произведенисенчи геройсен ĕçĕсене, событисене вăл, рентгентпа пăхнă пек витĕр курса, хирург пек ăста пĕлсе тăрать, произведенисен композицине вулакана илĕртсе тăма пултаракан «асамлă» меслетпе майлаштарса пыма пултарать»[22].

**Виталий Станьял ăсчах (1990 ç.):**

«Почти во всех произведениях присутствуют интригующие читателя любовные линии, но они, как правило, идут вторым – приглушенным планом, лишь временами резко перекрещиваясь с основной линией рассказа. Так было и в первом рассказе «Прорыв». В нем семейная неурядица Володи и Веры Комаровых является связывающей нитью сюжета повествования и помогает ярче подчеркнуть идею рассказа, утверждающую слитность семейного и общественного счастья человека. Любовную канву на первый план выставил К.Пайраш в рассказе «Когда становится трудно» («Йывăр килсен»). Студент-медик Михаил Иванов, навсегда потеряв любимую девушку Сильву, испытывает бессилие в борьбе с играми и решает уехать из деревни. Если Комаров показан мягкотелым студентом, то Иванов намного крепче его. Он находит в себе силу вернуться туда, где его ждут, где он нужнее.

Образ мягкотелого студента, оторвавшегося от жизни, не раз возникает в рассказах Пайраша. Писатель такого героя показывает в состоянии растерянности, в часы глубоких раздумий. Не справившись с поручениями любимой девушки, студент Геннадий поспешно уезжает на учебу. Но душа его беспокойна: «Что теперь скажет Валя? Слабый я человек, и не достоин быть рядом с такой боевой девушкой».

Положительные герои Пайраша – люди поисков, раздумий, сомнений. Они совестливы.

«Сумели ликвидировать прорыв в общественном деле, да прорыв образовался в личной жизни. Да и не мал он, семейный прорыв. Что же делать?» – терзается в поисках выхода Вера Комарова. «Неужели Сильва не сдержала обещания? Нет, нет!» – не колеблясь утверждает Миша. Читателю ясно, что эти сильные личности смогут найти правильное решение. Терзается сомнениями и другой герой – Ира («Комсомольский билет»). На ее вопрос автор дает положительный ответ: бдительность и честность Иры не должны вызывать сомнения. Но права ли Ира? У читателя двойное чувство: права в целом, и неправа по отношению к честному, но несколько непрозорливому в классовой борьбе Шишкину. В этом рассказе К.Пайраш повторяет опыт Д.Исаева («Рабфаковка») и оставляет вопрос открытым, дискуссионным...



Çыравçă-врача В.И.Давыдов-Анатри саламлать.
Пуху пĕрекинче Çемен Элкер, И.С.Максимов-Кошкинский, малта Алексей Талвир лараççĕ.

Рассказы К.Пайраша интересны сюжетными поворотами. Внутренние переживания героев, жизненные конфликты дополняются писателем публицистическими вопросами, на которые должен ответить не столько герой повествования, сколько сам читатель. Рассказ «Права ли я?» завершается таким же вопросом. Замечательный глазной врач, старый холостяк Ефим Ерусланов, лучший друг и коллега повествователя. Давняя дружба сближает их. Когда-то Ефим Петрович выручил Мефодия Ильича из неминуемой беды, но теперь Мефодий Ильич убедился, что попал в беду его друг Ерусланов: он стал черств, слеп душою. Шутя поломал он судьбу замечательной сельской медсестры Марины Любимовой, обманул ее, растоптал ее любовь к людям и работе. При видимой успешности выполнении задания Ерусланов своей безнравственной наглостью испортил все дело, потому что по его вине покинула село лучшая работница района. Но вина Ерусланова косвенна. Она прямо не соприкасается с общественным делом. Что же теперь делать герою-рассказчику? Ему ясны нравственное уродство, подлость и эгоизм врача Ерусланова, но как об этом сказать ему самому, хорошему и давнишнему другу, отличному специалисту? Вопрос каверзный: нравственная нечистоплотность врача остается в тайне от других, и открывать ее не будут ни она, ни он. Она уехала, потеряв веру в человека, он остался бездумно довольным, одержав привычную победу. Как назвать подлеца? Порвать с ним дружбу?»[23]

**Петĕр Ялгир сăвăç (1996):**

«Исполнилось 90 лет со дня рождения известного чувашского писателя Кузьмы Пайраша. Группа товарищей по перу собралась в Доме писателей в честь даты. Интересны были воспоминания о добром человеке, опытном враче и талантливом писателе.

Конечно, стоило провести в честь большого писателя литературно-музыкальный вечер в зале Чувашской филармонии. Мастера художественного слова прочитали бы со сцены его рассказы. Артисты драмы показали бы отрывки из спектаклей по его пьесам. Певцы исполнили бы любимые песни писателя. Однако бедственное положение

Союза писателей не дает возможности чествовать по-человечески собратьев. А надо бы.


ЧĂВАШ АВТОНОМИЛЛĔ СОВЕТЛĂ СОЦИАЛИЗМЛĂ РЕСПУБЛИКИ

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ

Кузьма Ильич Пайраш юлташ,

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ 1964-мĕш çулта декабрĕн 30-мĕшĕнче кăларнă Указпа Сире халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн

ЧĂВАШ АССР ТАВА ТИВĔÇЛĔ ВРАЧĔ ятне пачĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ

1965 ç. январĕн 4-мĕшĕ

Шупашкар хули

Кузьма Ильич Пайраш – автор более десяти книг прозаических и драматических произведений. Несмотря на большую занятость на основной работе в качестве врача-хирурга, Кузьма Ильич Пайраш находил время на создание высокохудожественных литературных произведений. Об этом есть статья в Краткой литературной энциклопедии. Произведения Пайраша привлекают читателя остротой сюжета, лаконичностью повествования.

Кузьма Пайраш считается мастером рассказа. В создании драматических произведений он также пользуется успехом. Первая пьеса – «Несчастные люди» – вышла отдельной книгой в 1928 году. Ее ставили и драмкружки, и профессиональные театры. Заметный след в истории драматургии и театров оставили пьесы «Друзья», «Близок локоть, да не укусишь», «Сердце у нее хорошее», «Бабуся».

К сожалению, его произведения сейчас найти нелегко. Последняя его книга была издана 20 лет назад, в 1976 году»[24].

**ЧПУ профессорĕ Данилов А.П. (1976 ç.):**

«1929 çулта К.Пайраш Мускаври медицина институчĕн студенчĕ пулса тăрать. Тĕнчипе паллă Пулевич академик, Абрикосов профессор тата ытти ученăйсем вĕрентнĕ пирĕн çĕршывăн нумай кĕтесĕсенчен пуçтарăннă çамрăксене...



К.И.Пайраш ҫуралса ӳснĕ кил умĕнче тăраççĕ: кĕçех унта пурăнма куçнă Кожевников Г.П. (формăпа), варринче колхоз ветеринарĕ тата хастар ялкор Мамаç Ҫимонĕ (1908–1982, Иштерекрен), Магазеев Санькка (купăспа, Вуспӳрт-Чорачăкран, Ланцев Кĕркорисен тăванĕ); малта чĕркуççи ҫине хирĕçле пускилти Волков Иван Антонович (~1890 ç.ç.) вырнаçнă.

Пайраш малтанхи ҫулсенче чылай жанрсемпе ҫырать, тĕрлĕ темăсене ҫутатса парас тĕлĕшпе хăйĕн ăсталăхне туптать. Каярахпа унăн пултарулăхĕнчи тĕп тема – совет интеллигенцийĕн коммунизм тăвас ĕҫри вырăнне кăтартасси пулни палăрать. Ҫак темăпа чылай ҫулсем хушши, ятлă-сумлă писатель пулса тăрсан та, ĕçлет вăл... Чăваш интеллигенцийĕ ҫинчен ҫырни вăтăрмĕш ҫулсенчи тăван литературăшăн ҫĕнĕлĕх пулнă.

«Комсомол билечĕ», «Ҫул ҫинче», «Тиман» калавсем палăрса тăраççĕ. Вĕсем вулакансене хăйсен сюжечĕсемпе, ăста композицийĕсемпе, интереслĕ событисемпе хумхантараççĕ. Ҫăмăл та ансат чĕлхепе ҫырнă произведенисене вуланăçемĕн вулас килет.

... Ун юлашки дневникĕсем. Икĕ хулăн тетрадь. Вĕсем ҫине «Прощай, медицина!» тесе ҫырнă. Тĕрлĕрен асаилӳсем, шухăшсем. Кашни йĕркерех Кузьма Ильич пурнăç ҫине

оптимистла пăхни, ăна чунтан юратни сисĕнет, хăй малашне ĕçлеме пултарайманшăн чĕререн пăшăрханнă вăл. Ĕмĕчĕсем пысăк пулнă. Дневник çинче çакăн пек йĕркесем пур: «Çырмалли калавсем», «Çурхи шывсем», «Ăсату каçĕ», «Çиçĕм пек сан хăвату». Пулас калавсен кĕске планĕсене палăртнă. Хăй республикăри паллă врач пулнăран, çӳлерех асăннă пулас калавсенчи сăнарсем те медицинăпа çыхăннă. Шутлатăп та тĕлĕнетĕп. Мĕн чухлĕ хастарлăх, вăй-хăват кирлĕ пулнă К.Пайраша пĕр вăхăтрах чаплă врач пулма тата литературăра тарăн йĕр хăварма.

...Пысăк пурнăç пурăнса ирттернĕ, хăйĕн пĕтĕм кунçулĕпе пултарулăхне тăван халăха панă çыннăн тава тивĕçлĕ ĕçĕсем куçкĕретех. Кузьма Пайраш писатель-гуманист произведенийĕсем чăваш литературин ылтăн фондне кĕрсе юлчĕç»[25].

**Николай Григорьев тĕпчевçĕ (1990):**

«Йывăр килсен» калав «сурăх тирне пĕркеннĕ кашкăрсене» вăхăтра тытса çăварлăхлама, пĕрлешӳллĕ çамрăк хуçалăха тĕреклетсе пыма чĕнет. «Сестра» калавра вара сăпайлă кăна Нина Розова пурнăçри тус-юлташа суйласа илес тĕлĕшпе мĕн тери таса та тирпейлĕ пулнине куратпăр. Чунĕпе мĕн тери пархатарлă та паттăр вăл медицина сестри! Строилов инженер ăна тивĕçлипе çапла хаклать: «...вилнĕ пек çынна чĕртрĕр, пилĕк пин çынна вилĕмрен хăтартăр, государствăн темиçе миллионлăх пурлăхне çăлса хăвартăр. Эсир хăвăр вырăнта пысăк мухтава тивĕçлĕ инженер». Писатель хавхаланса та ăшă туйăмпа çырса кăтартнине Нинăна калав пуçламăшĕнченех кăмăллама тытăнтăм та вĕçне тухсан та


К.И. Пайраш!
В честь знамен. даты Вашей жиз-ни, награждаю Вас, дорогой друг, Кузьма Ильич - „Медалью" богини искусств - Афродиты!
Да, пусть она долго-долго покровительствует Вашему бескорыстному оружию писателя и врача!
Ваш друг и соратник по искусству
[illegible]
17/XI 56.

кӑмӑла улӑштармастӑп. Хӑйӗн ӗҫӗ-тӑрӑшӑвӗпе вӑл пире ҫӗршыв интересӗсемшӗн пӗтӗм пултарулӑха пама, чӑн-чӑн патриотсем пулма чӗнсе хавхалантарать, савӑнтарать.

...Мӗнешкел ырӑ кӑмӑллӑ, пурне те лайӑх тума тӑрӑшакан, чир-чӗртен сыхланма усӑллӑ канашсем паракан, пулас мӑшӑрсене хӗр чысӗпе таса юратӑва упрама вӗрентекен врачпа паллашатпӑр эпир «Арҫынсем анчах айӑплӑ-ши?» калавра. Чӑн пурнӑҫри евӗр уҫӑн тухса тӑрать вулакан умне Елена Васильевна сӑнарӗ. «Качча тухса ырӑ ҫемье тӑвас текен хӗрӗн ӑстӑнпа кӑмӑл енчен кӑна мар, ӳт-пӳ тӗлӗшӗнчен те таса пулмалла», «Пӗтӗмӗшпе пирӗн хӗрарӑмсем... хисепе, мухтава, юратӑва тивӗҫлӗ.

Вӗсен те туйӑм пур, тен, ыттисенчен кая та мар пулӗ, анчах ҫав туйӑм вӗсене Таньӑпа Шалттайкин пек пӑсӑлса кайма мар, хавхаланма, ҫӗре ҫӗнӗрен ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума, мӑшӑрлӑ пулса, сывлӑхлӑ ӑру ӳстерме пулӑшать», – тет Елена Васильевна ячӗпе писатель. Ҫак шухӑша вӑл хӑйӗн ытти произведенийӗсенче те ҫиеле кӑларать, хӳтӗлет. Хӗрпе каччӑ хушшинчи хутӑшӑва, юратупа туслӑх, ҫемье ыйтӑвне К.Пайраш ытти калавӗсенче те хускатать, социализмла кӑмӑл ҫирӗплӗхӗшӗн кӗрешме чӗнет.

«Сӑмах татӑҫ-ши вӗсем?» – паянхи ҫамрӑксен пурнӑҫне, савӑнӑҫӗпе хуйхи-суйхине, ӗмӗт-тӗллевне кӑтартакан хитре калав. Ӗҫсем пир-авӑр комбинатӗнчи Малинин инженерпа Люся тавра пулса иртеҫҫӗ. Вунӑ класс пӗтерсе тухнӑ хӗр малалла вӗренме ӗмӗтленет,анчах тӗрӗс ҫул тупаймасть: пӗрре вӑл финанс институтне кӗме хӑтланса пӑхать, тепре ялхуҫалӑх институтне экзаменсем парать. Хӑй вара нихӑшне те кӑмӑлламасть, вӗренсе тухсан та ҫав специальноҫпа ӗҫлеме шутламасть. Ҫакна Малинин вӑхӑтра сиссе ӗлкӗрет те: «Йӑнӑш ҫулпа каятӑр, хӑвӑр пултарулӑхна курмастӑр», – тет ӑна тӳрремӗнех. Люся тӗрӗ ӗҫне юратнине, туртӑмӗ ҫавӑнталла пулнине шута илсе, каччӑ ӑна пир-авӑр комбинатне ӗҫе кӗрсен обществӑна ытларах усӑ кӳме пултарасса асӑрхаттарать, ҫавӑнта вырнаҫтарать те. Юлашкинчен Люся комбината пырса тӗрӗс тунине туйса илет, лайӑх специалист пулса тӑрать. Социализмла ӑмӑртӑва хутшӑнса, комбинат коллективӗпе пӗрле ҫӗнӗрен ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемшӗн кӗрешме тытӑнать. Люсьӑпа Малинин хушшинчи юратӑва писатель

уйрӑмах килӗшӳллӗ ҫырса кӑтартнӑ. Вӗсем пӗр-пӗриншӗн тӑрӑшнине, нимле йывӑрлӑх умӗнче те пуҫ усманнине палӑртнӑ. «Васкавлӑ пулӑшу», «Ҫӗнӗ юлташ» калавӗсенче те К.Пайраш чун-чӗре туртӑмӗ ӑҫтине тавҫӑрса илеймен ҫынсене пысӑк йӑнӑш тӑвасран хӑтарнине, вӗсене пурнӑҫри тӗрӗс ҫула тупма пулӑшнине куратпӑр.

Писателӗн юлашки ҫулсенче ҫырнӑ калавӗсенче вулакан умне тем чухлӗ ҫын хӑйсен уйрӑм сӑнарӗсемпе, савӑнӑҫӗ-хуйхипе туха-туха тӑраҫҫӗ. Ҫапах та пурте пӗр ӗмӗт-тӗллевпе пурӑнаҫҫӗ вӗсем: ҫыншӑн мӗн те пулин лайӑххине тӑвасчӗ. Фома Лукичах илер-ха акӑ («Моделлӗ туфли» калав). Сакӑрвуннӑран иртнӗ пулин те, чунӗпе ватӑ мар-ха вӑл. Ҫак илемлӗ тӗнче умӗнче ҫын парӑмӗсене тивӗҫтерсе ҫитернӗ-ши эпӗ тесе шутлать, халӑха мӗн те пулин ҫӗнни, килӗшекенни пама тӑрӑшать. Ҫак ӗмӗтпе вӑл тир-сӑран комбинатне каялла таврӑнать. Хӑй хатӗрленӗ ҫӗнӗ моделлӗ туфли кӑларма маҫтӑрсем хатӗрлет, вӗсенчен коммунистла ӗҫлекенсен бригадине йӗркелет. Каярах комбинат унӑн пуҫарӑвӗпе кӑларма тытӑннӑ моделлӗ туфлие хӗрарӑмсем юратса тӑхӑнни – Фома Лукича хавхаланса пурӑнма хистекен сӑлтавсенчен пӗри. Ҫак шухӑш-ӗмӗтпех ҫырнӑ «Пурӑнасчӗ тепӗр пилӗк ҫул» калавра та эпир ватӑ большевикпа паллашатпӑр. Хӗллехи кермене ҫапӑҫса илнӗ чух йывӑр аманнине пӑхмасӑрах вӑл колхозсем йӗркелес ӗҫе хастар хутшӑнать. Халӗ те акӑ, сывлӑхӗ хавшаса ҫитнӗ пулин те, тӑван ялне пысӑк тупӑш паракан сад ӗрчетет, чылайранпа пухса пынӑ укҫи-тенкине колхоза халаллать.

К.Пайраш паянхи телейлӗ пурнӑҫа иртнӗ асаплӑ саманапа танлаштарса кӑтартма юратать, ҫавна май пуласлӑх тата ырӑраххине палӑртать. Ҫакӑ уйрӑмах «Эх, мӑнтарӑн Кӗсенерӗ» калавра уҫҫӑн сисӗнет. Кӗсенер ялӗнче пӗр вӑтӑр ҫул каярах чиркӳсӗр пуҫне урӑх нимӗн те пулман. Халӗ пӑх та кур: унта – шкул, клуб, театр, больница, парк, кӳлӗ, мастерскойсем... пурнӑҫ ҫӗнелсе пынӑ май ҫыннисем те, шухӑш-кӑмӑлӗсемпе ӗмӗт-тӗллевӗсем те улшӑнаҫҫӗ. Юнашарах ларакан Акучапа Кӗсенер хушшинче ӗмӗртен хирӗҫӳ-харкашу пулнӑ, пӗр ял ҫыннисем тепӗр ял ҫыннисене тӑшман вырӑнне хунӑ. Тытса хӗнесрен е ҫапса пӑрахасран пӗр-пӗрин ялӗ витӗр тухса ҫӳреме те хӑранӑ. Халӗ вара ҫак ялсем хушшинче



К.Пайраш

нихҫан арканми туслӑх ҫирӗпленнӗ, икӗ ял пӗр пысӑк колхоза пӗрлешнӗ, пуян та тулӑх пурнӑҫшӑн пӗрле вӑй хураҫҫӗ. Сысна пӑхса пурӑнакан Петӗре ӗлӗк ним вырӑнне те картмастчӗҫ, паян вӑл – ялти ятлӑ та хисеплӗ ҫын, сысна фермин пуҫлӑхӗ. Вӑл тӑрӑшнипе колхоз ҫӗнӗ ӑратлӑ сысна ӗрчетет. Пӗр сӑмахпа каласан, ӗлӗкхи ял вырӑнӗнче аваллӑха аса илтерекенни нимӗн те юлман. Веҫех ҫӗнелнӗ, улшӑннӑ, лайӑхланнӑ. Калавне писатель ялхуҫалӑх специалисчӗсен хулара лармалла мар, чӑн-чӑн ӗҫ тума колхоз уй-хирне таврӑнмалла текен шухӑша асра тытса ҫырнӑ. «Мӗн каласа ҫырнӑ-ши?» калавра та ялхуҫалӑх теминех хускатнӑ. Вӗренӳ яланах кирлӗ ӗҫпе ҫыхӑнса тӑмалла, унсӑрӑн вӗреннин ним усси те ҫук. Пархатарлӑ ӗҫӗ вара ҫамрӑксене ӳсме, вӗренсе ҫын пулма, юратма пулӑшать. Эпир пурнӑҫшӑн усӑллӑ ӗҫре пиҫнӗ юратӑва кӑна хиселлетпӗр, ҫавнашкал туйӑм-сисӗм кӑна «ҫын сӑн-сӑпатне хитрелентерет, малалла пурӑнма, ӗҫлеме, тӗлӗнмелле ҫитӗнӳсем тума вӑйлӑ туртӑм парса тӑрать. Шӑпах ҫакнашкал юратӑва куратпӑр та калаври Володинпа Вера хушшинче, вӗсем тӑрӑшса ҫитӗнтерекен ҫӗнӗ йышши помидор малашне колхоз хуҫалӑхне пысӑк усӑ кӳрессе те ӗненетпӗр.

Тӑван хуламӑрпа тӑван ялӑмӑр, уй-хир, улӑх-ҫыран илемӗсене ҫырса кӑтартнӑ вырӑнсем писатель произведенийӗсенче час-часах тӗл пулаҫҫӗ. Вӗсем пур чухне те герой шухӑш-кӑмӑлӗпе, хуйхи-савӑнӑҫӗпе ҫыхӑнаҫҫӗ.

Писатель пире пурнӑҫпа хавхаланма, ҫутҫанталӑк илемӗпе киленме хӑнӑхтарасшӑн. Ҫапла вӑл этем кӑмӑл-туйӑмне ҫӗклес, унӑн кунҫулне вӑрӑмлатас ырӑ тӗллеве асра тытса тӑрӑшать. Ахаль мар вӑл вулакансене, машин пур ҫӗртех, хула

урамĕсемпе-и унта е ялпа ял хушшипе, Атăл хĕррипе-и е Йăлăм вăрманĕпе яланах çуран илсе çӳреме тăрăшать. Çула май усă сывлăшра ытларах çӳренин усси çинчен кала-кала парать, сывлăха упрама хушать тăван халăх пуласлăхĕшĕн»[26].

**Николай Григорьев тĕпчевçĕ (1986 ç.):**

Вулакансем ăна тĕрлĕ вăхăтра çырнă «Тиман», «Лайăх эмел», «Прорыв», «Лида йăнăшĕ», «Сестра», «Партбилет», «Хирург чунĕ», «Çĕлен наркăмăшĕ», «Юрату юрри» тата ытти йышлă калавĕсемпе пьесисем тăрăх пĕлеççĕ. Ансат та çăмăл чĕлхепе çырнă хайĕн произведенийĕсене писатель. Динамикăлла сюжет аталанăвĕ туртса пынипе вĕсене вуланăçемĕн вулас килет... Редакцисене тĕрлĕ корреспонденцисем ярса тăма пуçланă. Мĕн çинчен кăна çырса пĕлтермен пулĕ çамрăк ялкор вĕсенче! Ялсенче хут пĕлменлĕхе пĕтерес ĕç мĕнле пыни, комсомол ячейкисем чăмăртанса йĕркеленни, вулав çурчĕсем уçăлни, чухăнсен комитечĕсем хастар ĕçлени, çамрăксем «хĕрлĕ улахсем» йĕркелеме тытăнни, тĕшмĕшлĕхпе тĕттĕмлĕхе хирĕç похода тухни, тасалăхшăн кĕрешни – тата ытти ыйтусене те вăл комсомола хастарлăхпа çутатса тăнă.

...Каярах та К.Пайраш хаçат-журналпа çыхăну тытма пăрахман. Кивĕ пурнăçран юлнă йăла-йĕркене тĕп тăвас, этем сывлăхĕшĕн тăрăшас ыйтусене вăл хăйĕн кулленхи ĕçĕ тесе шутланă. Вĕсем пирки çине тăрсах çырнă, питлемеллине питленĕ, ырлама тивĕççине ырланă. Писатель-врачăн пĕтĕм пурнăçĕ, тăрăшăвĕ этем ырлăхĕшĕн кĕрешес пархатарлă ĕмĕт-тĕллевпе çыхăннă.

Фельетонсемпе очерксем пичетленĕ хушăрах К.Пайраш калавсемпе пьесăсем те çырнă. «Сунтал» журналăн 1924 çулхи пĕр номерĕнче унăн харăсах икĕ шӳтлĕ калавĕ пичетленнĕ. Кĕçех вулакансем «Наçтук» калавпа, «Телейсĕр кунсем» пьесăпа паллашнă. Çакăн хыççăн унăн интеллегенци пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен çырнă калавĕсем умлăн-хыçлăнах пичетленме тытăннă. Вĕсенче çамрăк писатель совет саманинче ӳссе вăй илекен яш-кĕрĕм кăмăл-туйăмне, мал ĕмĕтлĕ пурнăçне, юратăвĕпе кӳлешĕвне уçса кăтартма тăрăшнă, йăлари ытти кăткăс ыйтусене хускатнă. Хĕрарăм хăйĕн обществăри вырăнне ăнланса илнине, вăл халăх ĕçĕнче пиçĕхсе тĕрекленсе пынине, тĕрĕс çул çине тухма ăна мĕн тери йывăр пулнине, килйышрипе ялйышри йăла-йĕрке чăрмавĕсене хăюллăн сирсе пыма тивнине палăртнă.

Пĕрремĕш пилĕкçуллăх планĕн татăклă çулĕсенче, социализм никĕсне туса çитермелли çулта, ума «кам – кама?» ыйту тухса тăнă самантра райкомолта ĕçлекен Вера нимле хăрушлăха пăхмасăр района прорывран кăларассишĕн хыпăнать («Прорыв» калав). Общество интересĕсенчен малтан тăни – калавăн тĕп шăнăрĕ. «Комсомол билечĕ» калав та çав шухăшпах çыхăннă. Ираида Степановнăшăн комсомол хушнă ĕç, комсомол кăтартăвĕ – чи малти вырăнта. Пурнăçри пулăмсем ун умне сасартăк икĕ ыйту кăларса тăратаççĕ: мĕн пулнине пĕтĕмпех пытарсан, чĕре тасалăхĕ-тӳрĕлĕхĕ лапрапа витĕнет; сисĕмлĕхе çухатнă Шишкина тăрă шыв çине кăларсан, савнă çынран уйрăлма тивет, çире пурри тăлăха юлма пултарать. Иккĕллĕ шухăшпа пĕрлех Ира умне комсомол билечĕ курăнса каять. Вăл ăна «ĕмĕр манми çулпуç çулĕпе пĕр пăркаланмасăр малалла утма, социализмпа коммунизм тăвассишĕн татăклă кĕрешме» чĕнет. Класс тăшманĕ е тăшмана сутăннă çын комсомолкăшăн мăшăр пулма тивĕççĕр, пĕр шухăш-кăмăллă çынсем кăна пĕрлешсе çирĕп çемье тума пултараççĕ. Çакнашкал пархатарлă та ăса вĕрентсе çырнă произведенисем вăтăрмĕш çулсенчи çамрăксене çирĕп ура çине тăма, юлташа тăшманран уйăрса илме нумай пулăшнă. «Сестра» калаври Нина Розова сăнарĕ те вулакансене çĕршыв интересĕсемшĕн пĕтĕм пултарулăха пама, чăн-чăн патриот пулма хавхалантарать. Сăпайлă кăна çамрăк хĕр пурнăçри юлташа суйласа илес тĕлĕшпе мĕн тери таса та тирпейлĕ пулни савăнтарать пире.

Çĕнĕ саманари ĕççыннисене тасалăхпа çĕнĕ йăла-йĕркешĕн хускалнă кĕрешӳре чылай пулăшнă К.Пайрашăн «Лайăх эмел» калавĕ. «Чирпе эмел мар, организм хăй кĕрешет, вăл чире кĕрешсе çĕнтертĕр тесен, чи малтан таса та культурăллă пурăнма вĕренмелле». Ытти произведенийĕсенче те («Чăх куç», «Киле таврăнсан», «Хирург чунĕ», «Эсех-и ку?», «Дежурствора», «Çĕлен наркăмăшĕ», «Чĕри лайăх») вулакансен сывлăхне упрас, халăх пурнăçне май пур таран телейлĕрех тăвас тĕлĕшпе чылай усăллă канашсем парать писатель-врач. Мĕнешкел ырă кăмăллă, пурне те лайăх тума тăрăшакан, пулас мăшăрсене хĕр чысĕпе таса юратăва упрама вĕрентекен врачпа паллашатпăр эпир «Арçынсем анчах айăплă-ши?» калавра. Чăн пурнăçри евĕр уççăн тухса тăрать вулакансем

умне Елена Васильевна сăнарĕ. «Качча тухса ырă çемье тăвас текен хĕрĕн ăстăнпа кăмăл енчен кăна мар, ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен те таса пулмалла», «Пĕтĕмĕшле пирĕн хĕрарăмсем... хисепе, мухтава, юратăва тивĕçлĕ. Вĕсен те туйăм пур, тен, ыттисенчен кая та мар пулĕ, анчах çав туйăм вĕсене, Таньăпа Шалттайкин пек пăсăлса кайма мар, ĕçре çĕнĕрен çĕнĕ çитĕнӳсем тума, мăшăрлă пулса, сывлăхлă ăру ӳстерме пулăшать», – тет вăл. Çак тĕрĕс шухăша писатель пур чухне те хӳтĕлет, çиеле кăларать.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çулĕсенче К.Пайраш çар врачĕ пулнă. «Пуçламăшĕ», «Тĕлпулу», «Катерина Ларина», «Надя», «Тăван ял», «Партбилет» тата ытти çавнашкал патриотла калавĕсенче писатель совет салтакĕсен, медицина ĕçченĕсен характерĕсене тĕрлĕ енчен сăнласа кăтартнă. ...Вăрçă хыççăнхи хăшпĕр произведенийĕсенче те писатель çарпа патриотизм темине манаймасть, совет çыннин çĕнтерӳ савăнăçĕпе хавхаланнă кăмăл-туйăмне, пурнăçра тĕл пулакан йывăрлăхсемпе епле хастар кĕрешнине кăтартнипе пĕрлех чун-туйăм тасалăхне упрама кирлине те палăртса хăварать. Вăл сăнарлакан юрату – чуна парса кĕрешме, çутă малашлăхшăн çанă тавăрса ĕçлеме хавхалантаракан илемлĕ юрату. Шăпах çакăн йышши юрату хĕрсе çулăмланать те Друзин сержантпа Иванова врач хушшинче («Юрату юрри» калав). Ытарайми чипер те сăпайлă хĕр юратăвне тивĕç пулассишĕн Друзин пурнăçне те хĕрхенмест, хамăр çарсене çул уçса парса, тăшман дзотне хăй ӳчĕпе хупласа хурать. «Тăван çĕршыв ирĕклĕхне, таса юратăва çĕнсе илессишĕн пурнăçа пама та юрать» тесе хитре сăмахшăн çырман иккен паттăр сержант пĕр çырăвĕнче. Хăйĕн вилĕмĕпе вăл пайтах юлташне вилĕмрен хăтарать, савнă Ирина чĕрине те ĕмĕрлĕхе кĕрсе вырнаçать. «Чĕри лайăх» пьесăра писатель совет çыннин мораллĕ сăн-сăпатне уçса кăтартать. Чăнахах та лайăх чĕреллĕ çынсем вĕсем – пьесăри Добротин хирургпа Тамара сестра, Лавровпа Лискова çамрăк инженерсем. Сăнарсен кăмăл-туйăмĕ епле улшăнса-çирĕпленсе пынине ăста йĕркеленипе вĕсен хушшинчи пулăмсене вулакан йăлтах ĕненет. Мĕн чухлĕ пăшăрханмалли, ăша хыптармалли тупăнать тата Зарубин хирургăн. Хăй операци тунă хĕрарăм вилнĕ тенине илтсен, вăл чĕререн пăшăрханать, чире каять. Вилекенĕ

урăх çын пулнине пĕлни кăна хирурга ура çине тăма пулăшать. Çынна çутăпа ăшă парса, майĕпен çунса пĕтекен çуртапа ахаль танлаштармаççĕ пулĕ çав чăн-чăн врачсене!

...«Вăрăм ĕмĕр» калав та интереслĕ вуланать. Ленин хушнине пурнăçласа, халăха усăллă ĕçсем нумай тунă Сергей Любавин тăван хулапа республика ӳсĕмĕшĕн чунне пама хатĕр. Ĕçпе мĕн ачаран туслашнăран сывлăхĕ те çирĕп унăн, шухăшкăмăлĕ те уçăмлă. «Пурăнăр Любавин пек, – тет калава вĕçленĕ май писатель. – Ун пек пурăнсан, эсир те ун çулне çитĕр, иртсе те кайăр». Фома Лукичпа Сергей Любавин – паянхи çамрăксемшĕн тĕслĕх пулмалли, ĕçлеме те кĕрешме, обществăшăн усăллă çын пулма вĕрентекен пархатарлă сăнарсем. Пĕрлех «Кинемей» пьесăри Акулина Петровна пирки те ăшă сăмах каласа хăварас килет. Пенсие тухас вăхăт иртсе кайнă пулин те, сывлăхне ӳпкелемест-ха вăл, пир-авăр тĕртнĕ çĕрте хăй вĕрентнĕ çамрăк хĕрсемпе танах вăй хурса ĕçлесшĕн.

Тăван хуламăр ӳсет, чечекленет. «Унта та кунта çуртсем купалаççĕ, канавсем чаваççĕ, картасем тытаççĕ...» Çак çитĕнӳсемшĕн чун-чĕрипе тăрăшакан Елена йывăрлăхран «тĕмĕ айне пытанакан» упăшкинчен уйрăлать. Паянхи вĕресе тăракан пурнăçра тĕл пулакан çакнашкал юрăхсăр элементсене писатель пĕтĕм курайманлăхпа питлет. Çăмăл пурнăç шыракан Лизатовпа Хитров пек тӳнтерле («Уйрăлу» калав), «пурне те пултаракан» Лисицинпа ăна пулăшакан сивлек çынсене («Чавса çывăх та çыртма çук» пьеса), патшалăх пурлăхне хăйпăтас ĕмĕтпе хăрăнса çӳрекен Гена йышши йĕксĕксене («Сăмах татăç-ши вĕсем?» калав), ĕçке пула ĕç вырăнне те, çемйине те çухатнă Ларин пек çемçешкесене («Арăм» калав) пĕтĕм халăх умĕнче намăслантарать.

Ансат та çăмăл чĕлхепе çырнă К.Пайраш хăйĕн произведенийĕсене, ытлашши эрешлемесĕр, пуплевсене тăсса кăткăслатмасăр. Çавăнпа автор шухăшне тӳрех тавçăрса илетĕн, уçăмлах ăнланатăн. Витĕмлĕ, куçа курăнакан сăнарсем тăвас тĕлĕшпе те писатель пысăк ăстаçă пулнине палăртмалла. Епле манăнха продразверстка вăхăтĕнчех совет влаçĕн тăшманĕсемшĕн «аслати те çиçĕм» пулнă Тиман коммуниста («Тиман» калав), иртнĕ вăрçăра этемлĕх телейĕшĕн çапăçса сусăрланнă Надьăна («Надя» калав), çĕнĕ эмелпе усă курма тытăниччен ăна пурнăçне шеллемесĕр хăй çинче тĕрĕслесе пăхакан Юльăна («Çĕлен



Иккĕмĕш (аслă) пусăмри совпартшкулăн 1 курсĕн 2 ушкăнĕ. 1928-1929 вĕренӳ çулĕ. Виççĕмĕш ретре, сулахайран 5-мĕшĕ (шурă кĕпепе, костюмпа) Миронова (кĕçех Пайраш пулать) Матрена Ивановна тăрать. Пĕрремĕш ретре сулахайран иккĕмĕш ларакана репрессиленĕ пирки Пайрашсем хуратнă.

наркăмăшĕ»), кулаксене çăварлăхлас ĕçре хăйне чăн-чăн парти çынни пек кăтартнă Вальăна («Валя мĕн калĕ?» калав) тата чĕре варне кĕрсе вырнаçнă ытти геройсене!

Пĕтĕм пултарулăхĕпе ăсталăхне этем сывлăхĕпе телейне упрас ĕçе халалланă К.Пайраш медицина ĕçченĕсен профессине чун-чĕререн хисеплени, вĕсен йывăр та пархатарлă ĕçне пысăка хуни, çавăнпа пĕрлех сывлăха сыхлассине ячĕшĕн çеç тăвакансене сивлени унăн калавĕсемпе пьесисенче уççăн курăнать. Епле ăшшăн та чуна хускатмалла сăнарланă вăл Добров, Елена Васильевна, Тетерин, Ирина Ивановна, Зарубин тата ытти врачсемпе медицина сестрисене!.. Çапла, чăн-чăн сывлăх хуралçи, этем чунĕн инженерĕ пулнă Куçма Пайраш. Вăл 1938 çултанпа СССР писательсен Союзĕн членĕ пулнă[27].

**Мăшăрĕ Пайраш М.И. (1976 ç.):**

Çамрăк Куçмапа эпĕ 1925 çулта Шупашкарти совпартшкулта вĕреннĕ чухне паллашрăм. Сăпайлă, ырă чун-чĕреллĕ, пĕлÿшĕн питĕ çунакан каччăпа часах килĕштертĕмĕр. Иксĕмĕрĕн шухăш-кăмăлсем те пĕр пекчĕ те, пĕрлешрĕмĕр вара.

Совпартшкулта вĕреннĕ чухнех хаçатсене тăтăшах çырса тăратчĕ. Унăн заметкисем, очеркĕсем, фельетонĕсем, репортажĕсем питĕ аван пулса тухатчĕç те, пĕрле савăнаттăмăр.

1928 çулта Мускаври медицина институтне кĕме шухăш тытни çинчен пĕлтерчĕ. Каçсерен сĕм-çĕрлеччен хатĕрленетчĕ. «Ывăнтăм», – тенине пĕрре те илтмен эп унран. Хам та чылай пулăшса пытăм ăна хатĕрленме (эпĕ ун чух Шупашкарти пединститутра истори уйрăмĕнче вĕренеттĕм).

Кузьма Ильич Мускавра вĕреннĕ чух унăн Вускассинче пурăнакан ашшĕне, Илья Яковлевич Садикова, ялти куштансем пуян пурăнакансен шутне кĕртсе, ялтан кăларса яма хăтланчĕç. Илья Яковлевича, чухăнсен комитечĕн председателĕ пулнăскере, курайман çав кулаксем. Çакăн çинчен Кузьма Ильича Мускава çырса пĕлтертĕмĕр. Вăл хăвăрт пуçтарăнса Шупашкара килсе çитрĕ. Вăл тăрăшнипе ашшĕне хăрушлăхран хăтартăмăр.

Петр Петровичпа вĕсем пит туслăччĕ, пирĕн хваттерте мĕн чуль шăкăл-шăкăл калаçса ларман пуль. Эх, пурăнас пулсан, Кузьма Ильич татах мĕн чуль çыратчĕ пуль. Ĕçлес кăмăлĕ питĕ пысăкчĕ-çке. Пурнăçа юрататчĕ. «Пурнăç ĕçчен çынсене кăна юратать», – тетчĕ пĕрмаях. Çакă пулăшнă та ĕнтĕ ăна пур çĕрте те ĕлкĕрме, пурнăçпа тан утма[28].

## К.И.Пайраш пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен çырнисем

– «Канаш», 16.01.1928 (Хумма Çеменĕ. Куçма Пайрашăн «Телейсĕр кунĕсем»).

– «Канаш», 19.01.1928 («Телейсĕр кунсем» пирки вулакансем мĕн калаççĕ).

– «Сунтал», 1931, 12 №, 39 с. (Виктас В. «Прорыв»); 39-40 с. (Иванов Ф. «Прорыв»).

– Сунтал», 1938, 4 №, 2 с. (Митрофанов Н. Пĕр-ик сăмах «Комсомол билечĕ» пирки).

– Сунтал», 1938, 6 №, 32-33 с. (Романова Е. № «Комсомол билечĕ» калав пирки).

– Сунтал», 1939, 4 №, 31-32 с. (Каргин А. «Лида йăнăшĕ» çинчен); 30-31 с. (Медведев А. К.Пайрашăн «Сестра» калавĕ пирки).

– «Чăваш коммуни», 10.07.1946 (Василий Алендей. Икĕ калав çинчен: «Надя» калав).

– «Ялав», 1950, 5 №, 32 с. (Макар Хури. Çул çинче).

– «Чăваш коммуни», 15.12.1950 (Стихван Шавли. Паллă врач–паллă писатель).

– «Ялав», 1951, 3 №, 30-31 с. (Леонтьев Г. Эпир Еруслановпа Мефодий Ильича кăмăлламастпăр).

– Тăван Атăл, 1952, 3 №, 155-160 с. (Константин Иванов. «Чĕри лайăх» пьеса пирки.

– «Ялав», 1955, 11 №, 30-32 с. (Афанасьев А.Н. Айзманпа К.Пайрашăн «Чавса çывăх та çыртма çук» комедийĕ пирки).

– «Советская Чувашия», 17.11.1956. (Аркадий Ёсхĕл. Писатель çулĕ).

– «Ялав», 1956, 11 №, 20 с. (Илпек Микулайĕ. Куçма Пайраш).

– «Коммунизм ялавĕ», 18.05.1957 (Александр Галкин. Тĕрĕс çул çинче).

– «Тăван Атăл», 1962, 3 №, 96-97 с. (Николай Григорьев. «Юрату юрри»).

– Юрьев М.И. Чувашские писатели: Биобиблиографический справочник. Чеб. 1964.

– «Чăваш календарĕ», 1966, 125-126 с. (Михаил Юрьев. Куçма Пайраш).



Ĕçре те, пултарулăхра та малта пулнăшăн К.И.Пайраш темиçе хут та Мухтав хучĕсене тивĕçнĕ. Саламлакан ЧАССР Аслă Канашĕн Президиумĕн секретарĕ хыçĕнче Ухсай Яккăвĕ ларать.

– Чувашское радио и телевидение: Программа передач, 14.11.1966.

– «Ялав», 1966, 11 №, 28-29 с. (Леонид Агаков. Куçма Пайраш).

– «Капкăн», 1966, 23 № (коллектив. Куçма Ильич Пайраша).

– «Тăван Атăл», 1966, 6 №, 93-94 с. (Михаил Юрьев. Ялкортан пуçласа).

– Юрьев М. Чăваш писателĕсем: Биобиблиографи справочникĕ. Шуп. 1968.

– Краткая литературная энциклопедия. Т. V. М. 1968, Кузьма Ильич Пайраш.

– «Тăван Атăл», 1976, 11 №, 79-80 с. (Николай Григорьев. Куçма Пайраш).

– «Çĕнтерӳ ялавĕ», 16.11.1976 (Анатолий Данилов. Ĕмĕрех халăх асĕнче).

– Григорьев Н.Г. Юратнă сăнарсем: Статьясем.- Шуп. 1980, 70-80 с.

– «Тăван Атăл», 1986, 11 №, 64-65 с. (Николай Григорьев. Куçма Пайраш).

– Юрьев М.И., Романова З.В. Писатели Советской Чувашии: Биобиблиографический справочник. Чеб. 1988, с. 234-235.

– Григорьев Н.Г. Пархатарлă сăнар, сăнарлă чĕлхе: Литературăпа критика статйисем. Шуп. 1990, 39-48 с.

– Никитин (Станъял) В.П. Чувашский рассказ: (1921-1941). Чеб. 1990, с. 91-93.

– Ерагин Е.Е. Моргаушский край. Моргауши. 1994, с. 49-50.

– Алексеев Г.А. Медики Чувашии в годы войны. Чеб. 1995, с. 305.

– «Чăвашъен», 21.12.1996 (Петр Ялгир. Книги чувашских классиков надо переиздавать).

– Данилов А.П. Публицистикăпа илемлĕ литература ыйтăвĕсем. Шуп. ЧПУ изд. 2002, 181-185 с.

– «Çĕнтерӳ ялавĕ», 15.11.2006 (Евгений Ерагин. Пултаруллă врач пултаруллă çыравçă пулнă)[29].

## Куҫма Пайраш кӗнекисем

Кузьма Ильич нумай ӗҫленӗ, ҫырнӑ: ял пурнӑҫӗ, сывлӑха упрасси, тирпейлӗхпе культура, ыр хутшӑнусем, литература, тӗн-тӗшмӗш т.ыт.те. Ҫак темӗсемпе ҫырнӑ материалсем, илемлӗ хайлавсем тӗрлӗ хаҫат-журналта пичетленнӗ. 1950 ҫҫ. калӑпӑр, вӑл тӗлӗк-тӗшмӗш, хӗреслӗх тӗнӗн киревсӗрлӗхӗ пирки ҫырнӑ (сӑмахран, «Тӗшмӗшсем – сывлӑх тӑшманӗсем» т.ыт.те)[30]. Кӗнекесем те чылай йӗркелесе кӑларма хевте ҫитернӗ. Вӗсем ҫаксем:

Телейсӗр кунсем (4 пайлӑ драма). Шуп. 1928. (48 с., 2000 экз.).

Лайӑх эмел (калавсем). Шуп. 1934. (115 с., 4000 экз.).

Ҫул ҫинче (калавсем). Шуп. 1950.

Кинемей (3 курӑнуллӑ пьеса). Шуп. 1954. (20 с., 2000 экз.).

Калавсем. Шуп. 1957. (396 с., 5000 экз.).

Сӑмах татӗҫ-ши вӗсем? (калав). Шуп. 1957. «Ялав» библ., 11 №. (48 с., 2200 экз.).




*УВАЖАЕМЫЙ ТОВАРИЩ*

Орлова !

*Правление Союза писателей Чувашии приглашает Вас на творческий вечер чувашского писателя К. И. Пайраша, в связи с 50-летием со дня его рождения.*

*Юбилейная комиссия.*

ПОРЯДОК ВЕЧЕРА:

1. Доклад о творческой деятельности К. И. ПАЙРАША.
   (Докладчик тов. Ильбеков).
2. Приветствия юбиляру.
3. Выступления писателей.

Вечер состоится 17 ноября 1956 года в помещении Союза писателей (ул. К. Маркса, 1).

Начало в 20 часов.

Мĕн вăл чун? Мĕн вăл тĕлĕк? Шуп. 1958. (14 с., 5000 экз.).
Тĕшмĕшсем çинчен. Шуп. 1958. (14 с., 5000 экз.).
Юрату юрри (калав-сем). Шуп. 1960. (167 с., 2500 экз.).
Лида йăнăшĕ (калавсемпе пьесăсем). Шуп. 1976. (384 с., 10.000 экз.)[31].

Юлашки çç. тухнă тăван сăмахлăхпа шкулта паллаштармалли вулантăк-вĕрентĕксенче Куçма Пайраш ячĕ валли, шел пулин те, вырăн тупăнайман.



## КУЗЬМА ИЛЬИЧ ПАЙРАША[32]

*(60 çул тултарнă май)*

Капкăнçăсенчен пĕри
Теттĕмĕр сана ялан.
«Мăкалмарĕ-шн перн!» —
Систерет хапь вулакан.

Эс, çыравçă та хирург,
Çитрĕн акă утмăла.
Сан канма та вăхăт çук,
Малаллах-çке утмалла.

— Операци!.. Хăвăртрах!
Хăвăртрах, Кузьма Ильич!
...Çĕн капав çав вăхăтрах
Тилмĕрсе кĕтет ял-йыш.

Юбилей тивпечĕпе
Сунăпăр çĕн çĕнтерÿ:
Аллунти çут скальпель пек
Çивĕч пултăр сан перу!

Юлташла тăрăхласа
Н. ЯКОВЛЕВ ÿкернĕ

## К.Пайраш куçаруçă

Чăвашла та, вырăсла та пĕлни, тăван чĕлхене лайăх туйни К.И.Пайраша 1920-1930 çç. анлă сарăлнă куçару ĕçне хутшăнма май панă. Вунă çул тăлмач ăна ăнаçлă туса пынă. Ахальтен-им пĕр кĕнекесене кăна вăл 20 ытла чăвашла куçарнă. Çакна тума ăна мединститутра вĕреннĕ чух тĕрлĕ халăхсен Мускаври тĕп издательствипе тачă çыхăну йĕркелеме май тупни пулăшнă, студент пурнăçне çăмăллатнă. Анлă тавракурăмлă çамрăк çыравçă тĕрлĕ отраслье – экономикăпа финанс, политика, ялхуçалăхĕпе индустри, çар т.ыт.те – çыхăннă ĕçсене çăмăллăнах тăван халăх ăс-хакăлне килĕшӳллĕ, юрăхлă тунă.

К.И.Пайраш чăвашла куçарнă кĕнекесем:

– Булак В. Çамрăк батраксем хушшинче ĕçлесси. Шуп. 1927 (34 с., 3000 экз.) – вырăсла ячĕ: Булак В. Работа среди батрацкой молодежи (К.Сергеевпа пĕрле куçарнă);

– Кириллов А. Совет Союзĕнче тырă-пулла мĕнле сутса илеççĕ. М. СССР-ти халăхсен тĕп изд. 1929 (54 с., 3000 экз.) – выр. ячĕ: Кириллов А. Как покупают и продают хлеб в СССР;

– Эрде Д. 1905-мĕш çул. М. СССР-ти халăхсен тĕп изд. 1930 (68 с., 4000 экз.) – выр. ячĕ: Эрде Д. 1905-й год;

– Эрде Д. «Хресченсен вăрçи». 1905-1907 çулсенчи революци. М. СССР-ти халăхсен тĕп изд. 1930 (64 с., 4000 экз.) – выр. ячĕ: Эрде Д. «Крестьянская война»;

– Дедов А.Г. Ялхуçалăх налогĕн çĕнĕ законĕ çинчен. М. Центриздат. 1930 (46 с., 6000 экз.) – выр. ячĕ: Дедов А.Г. О новом сельхозналоге;

– Ялхуçалăх налогĕн çĕнĕ законĕ. 1930–1931-мĕш окладлă çул. М. СССР-ти халăхсен тĕп изд. 1930 (64 с., 7000 экз.) – выр. ячĕ Положение о новом сельхозналоге (И.Пинерпа пĕрле куçарнă).


Пролетарии всех стран, соединяйтесь!
Коммунистическая партия Советского Союза
Чебоксарский Городской Комитет
ПРОПУСК № 404
Товарищу Садыкову-Пайраш К.И
на право входа на собрание партийного актива города Чебоксары. Собрание состоится „16“ марта 1956 г.
в помещении библиотеки горкома КПСС
Начало в 19 час. –
Без предъявления партбилета недействителен.
Горком КПСС

– РСФСР-ти Советсемпе Советсен съезчĕ-

сене делегатсем суйласси çинчен. Инструкци. М. СССР-ти халăхсен тĕп изд. 1930 (40 с., 5000 экз.) – выр. ячĕ: Инструкция о выборах в Советы и на съезды Советов РСФСР;


Чăваш Автономиллĕ Советлă
Социализмлă Республикин
Верховнăй Совет
Президиумĕ
КУЗЬМА ИЛЬИЧ ПАЙРАШ ятана çуралнăранпа 50 çул тултарнă май тата чăваш совет литературине аталантарас тĕлĕшпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн
ХИСЕПЛĔ ГРАМОТА
парса наградăлать
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ
Шупашкар хули, 1956 çулхи ноябрĕн « 1 » мĕшĕ.

– Воробьев В. «Мĕн мана промышленноç!» (Промышленноçа малалла аталантарасси çинчен). М. СССР-ти халăхсен тĕп изд. 1930 (40 с., 4000 экз.,) – выр. ячĕ: Воробьев В. «Что мне до промышленности!»;

– Киндеев К. Колхоз строительствин хальхи задачисем. М. СССР-ти халăхсен тĕп изд. 1930 (61 с., 15000 экз.,) – выр. ячĕ: Кин-деев К. Боевые задачи колхозного движения (Г.Орьевпа пĕрле куçарнă);

– Полонин К. тата Осипов И. Агроминимум е тыр-пул тухăçлăхне хăпартасси. М. СССР-ти халăхсен тĕп изд. 1930 (112 с., 5000 экз.,) – выр. ячĕ: Полонин К. и Осипов И. Агроминимум или как поднять урожайность;

– ВКП (б). Партин халăха вĕрентес ĕç ыйтăвĕсем пирки пухăннă Пĕтĕм Союзри 2-мĕш канашлăвĕ йышăннă резолюцисем. М. СССР-ти халăхсен тĕп изд. 1931 (64 с., 3000 экз.) – выр. ячĕ: ВКП (б). Всесоюзное совещание по вопросам народного образования, 2-е. Резолюции..;

– Ленин партийĕ çинчен. Шуп. 1931 (32 с., 8000 с.,) – выр. ячĕ: О партии Ленина;

– Зубов Н.И. Промышленноç таварĕсем мĕншĕн çитмеççĕ. М. СССР-ти халăхсен тĕп изд. 1931 (36 с., 5000 экз.,) – выр. ячĕ: О партии Ленина;

– Иваницкий А.Я. Колхозсемпе колхозниксене паракан ҫăмăллăхсем. Законсем. М. СССР-ти халăхсен тĕп изд. 1931 (48 с., 8000 экз.,) – выр. ячĕ: Иваницкий А.Я. Законы о льготах для колхозов и колхозников;

– Яковлев Я.А. Совхоз строительстви ҫинчен. Пĕтĕм Союзри Советсен 6-мĕш съездĕнче тунă доклад. М. СССР-ти халăхсен тĕп изд. 1931 (48 с., 7000 экз.,) – выр. ячĕ: Яковлев Я.А. О совхозном строительстве.

– Нухрат А. Потребкооперацин вак халăхсен районĕсенче йăла тĕлĕшпе тумалли ĕҫсем. М. Центриздатпа Центросоюз. 1931 (61 с., 3000 экз.,) – выр. ячĕ: Нухрат А. Бытовая работа потребительской кооперации в национальных районах;

– Ацаркин А. Карл Либкнехт. Шуп. 1932 (32 с., 3000 экз.,) – выр. ячĕ: Ацаркин А. Карл Либкнехт;

– Лонговой А. Мĕнле вĕсем «хĕҫпăшалсăрланаҫҫĕ». Шуп. 1932 (32 с., 5000 экз.) – выр. ячĕ: Лонговой А. Как они «разоружаются»;

– Середин Г. Ҫар техникине вĕренер. Шуп. 1932 (37 с., 10.000 экз.,) – выр. ячĕ: Середин Г. Овладеем военной техникой;

– Распэ Е. Темтепĕр курнă Мюнхаузен. Ачасем валли. К.Чуковский каласа пана. Шуп. 1935 (88 с., 5000 экз.) – выр. ячĕ: Распэ Е. Приключения Мюнхаузена;

– Мурзин А.Н. Трахома пунктисенче ĕҫлекенсене куллен кирлĕ кĕнеке. Шуп. 1936 (131 с., 2000 экз.,) – выр. ячĕ: Мурзин А.Н. Руководство для работников трахоматозных пунктов[33].

# К.Пайраш рецензет



Пайраш К.И. ҫӗнӗ кӗнекесене тишкерес, хаклас ӗҫе те хастар хутшӑннӑ. Тӗрлӗ енлӗ литературӑна (культурӑпа политика, медицинӑпа ялхуҫалӑх т.ыт.те) кӑсӑкланнӑ. 1920-ш ҫулсенчех нумай хайлав содержанийӗ, пӗлтерӗшӗ-тӗшши пирки, авторӗ ҫинчен тарӑн та ҫивӗч шухӑшласа хӑй сӑмахне каланӑ. Вӑл илемлӗ сӑмахлӑх пӗлӗвӗпе критика ыйтӑвӗсене хускатни те кӑсӑклӑ. Тӗрӗссипе илсен, ҫыравҫӑ чӑваш литературине те рецензисемпе кӗнӗ теме пулать.

К.Пайрашӑн хӑшпӗр тишкерӳ-хаклавӗсем:

«Ҫуталла. Шуп. 1923» кӗнеке пирки («Канаш», 18.05.1924);

«Левгур. Комсомолецӑн тумалли ӗҫӗсем. Шуп. 1926» кӗнеке пирки («Канаш», 2.06.1926 – «Ҫӗнӗ кӗнекесем»);

«Максимов С.М. Революци юррисем. М. Центриздат. 1926» тата «Максимов С.М. Чӑваш кӗввисем. 2 пайӗ. М.: Центриздат. 1926» кӗнекесем пирки («Канаш», 20.08.1926 – «Ҫӗнӗ кӗнекесем»);

«Степан Лашман. Савни енчӗкӗ (поэма). Шуп. 1926» кӗнеке пирки («Ҫамрӑк хресчен», 26.12.1926);

«Рыклин Г. Партин 15-мӗш конференцийӗ тунӑ ӗҫсем. М. Центриздат. 1927» кӗнеке пирки («Канаш», 8.02.1927 – «Ҫӗнӗ кӗнекесем»);

«Андреев С. Ленин комсомолӗпе ялти Советсене йӗркелес ӗҫ. Шуп. 1927» кӗнеке пирки («Канаш», 9.12.1927 – «Ҫӗнӗ кӗнекесем»;

Хаҫатсенчи «Литература страницисем» пирки («Канаш», 4.12.1927 – «Пуҫа килнӗ шухӑшсем»);

«Степанов Ф.С. Комсомолецсен ялта ленинла вӗрентес ӗҫӗ. Шуп. 1927» кӗнеке пирки («Канаш», 25.11.1927 – «Ҫӗнӗ кӗнекесем»);

Петр Осиповӑн «Трахом юрри» драми пирки («Канаш», 19.01.1928);



## ЮЛТАШ САЛАМĔ

Хисеплĕ хурăнташ,
Илле Куçми, Пайраш!
Кунсем, çулсем иртеççĕ ваш та ваш,
Паян ак эсĕ — аллăри чăваш.
Вăрман кашлатăр каш та каш;
Сан аллунта перо, кранташ:
Калав та повесть шăрататать Пайраш.
Çырать яш-яш,
Туртать чăш-чаш!
Тусла, ик-виç канаш
(Бюрократла вăл инструктаж)
Сана парам-ха эп, Пайраш:
Ан ватăл, çыр! Чунупала тавлаш! —
Çырулăх питĕ чăкăлташ.
Ан пултăр ĕçÿнте каяш,
Маяк пек йыхăртăр малаш!
Хĕн-хур килсен ан пул ачаш!
Çынпа ăслипе çеç туслаш!
Критиксемпе пит ан сутлаш!
Редакторпа та ан харкаш,
Анчах та, кирлĕ чух, туллаш!
Вулаканпа час-час паллаш!
Çулла çул утă, выр ыраш!
(Пире пит кирлĕ проминаж).
Ан ÿстĕр хырăм — ту массаж!
Çи турăх, сĕт: сахалтарах çи аш,
Вара ялан пулатăн яш.
Анланмалла-и инструктаж,
Пайраш юлташ?!
Пул прозăра чи хăватли!
Салампала —

Стихван ШАВЛЫ.[34]

Советла чăваш сăмахлăхĕн аталанăвĕ пирки («Чăваш коммуни», 26.01.1941 – «Чăваш литературин хăшпĕр ыйтăвĕсем çинчен»);

Иван Мучи çинчен («Ялав», 1946, 4 №, 32 с. – «Пирĕн вĕрентекен пулнă»);

«Черникова Л.В. Дояркăсене врач панă канашсем. Шуп. 1954» кĕнеке пирки («Коммунизм ялавĕ», 10.11.1954;

«Динин С.М., Нимен Л.Б. Сывлăхпа тасалăх пирĕншĕн пит лайăх. Шуп. 1954» кĕнеке пирки («Коммунизм ялавĕ», 17.12.1954 – «Çирĕп сывлăхшăн тата тасалăхшăн»;

«Димитриев В.Д. Выдающийся русский ученый В.М.Бехтерев. Чеб. 1960» кĕнеке пирки («Советская Чувашия», 31.05.1961 – «Новая книга о В.М.Бехтереве»)[35].

## Кусма Пайраш
## «Хыпарпа» тантăшĕсем çинчен[36]

1918 çулта... революципе граждан вăрçи сарăлса пынă вăхăт пулнă... Пĕррехинче хамăр ялтан виçĕ-тăватă çухрăмра ларакан Анат Кĕнерте чиркӳ чанĕ çапса янă сасă илтĕнчĕ. Çав сасăпа тĕттĕм халăх пухăнса вулăс кантурне пуçтарăнса каять те вулĕçтăвом председательне урама тухса ислетет, хучĕсене вара (паллах, унта тем тĕрлĕ кирлĕ хутсем те пулнă) уя илсе тухаççĕ, çунтарса яраççĕ... Манăн обществăлла ĕç лăп та шăп çак вăхăтра ĕнтĕ пуçланнă... Эпĕ халăх пуххисенче тата урамра пуçтарăнса ларакан çынсем хушшинче хаçатсем вуласа пама тытăнтăм. Вăл вăхăтра тата яла тĕрлĕ плакатсем те нумай ярса паратчĕç. Эпĕ вĕсене те, нимрен малтан Ленин сăнне, чи курăнмалла çĕре, хурал пӳрчĕн алăкĕ çумне, çыпăçтарса хутăм. Çапла ĕçлени чăнах пулăшрĕ пулас, мĕншĕн тесен пирĕн ялта урăх нихăçан те пăлхану пулмарĕ. Ун чухнехи тĕп задача – шуррисемпе çапăçакан Хĕрлĕ Çара пулăшассиччĕ, нимрен ытла ун валли хĕçпăшал кирлĕччĕ. Унччен империализмла вăрçăран таврăннă салтаксем хăйсемпе пĕрле виновкăсемпе гранатăсем те илсе килкеленĕ. Каярахпа эпир, ачасем, çав пăшалсене Хĕрлĕ Çар валли пуçтарма пулăшрăмăр. Тата вăл вăхăтра нумай хĕрлĕ салтаксене урисене тăхăнма атă-пушмак та пулман. Çавăнпа ялта çăпатасем те пухма тиврĕ. Çăпатине атте пуринчен ытла хăй нумай турĕ, кайран вулăса лавĕпех леçрĕ. Эпир Хĕрлĕ Çар ретĕнче çапăçакан салтак арăмĕсене çураки туса пама та пулăшнă.

Совет влаçне çав çулсенче укçа-тенкĕ питĕ кирлĕ пулнипе кулаксене контрибуци (укçан тӳлеме) хурса паратчĕç. Хамăр патри çавăн пек пĕр кулак çинчен çырас кăмăл çуралчĕ. Анчах çырнине ниçта яма пĕлменнипе чарăнса тăма лекрĕ... Хаçата çырас кăмăл çухалмарĕ. Ăна манăн каярахпа, 1921-мĕш çулта, яла пупсем килсе килĕрен тырă пуçтарса кайнă хыççăн, пурнăçлама май килчĕ. «Канаш» хаçат эпĕ çырнă заметкăна пичетлесе кăларчĕ. Ун хыçĕнчен, хавасланса, хамăр ялти пĕр ырă çын тăлăха тăрса юлнă ачасене Шупашкара илсе кайса ача çуртне вырнаçтарса хăварни çинчен çыртăм. Ăна та пичетлерĕç.



Хам хушамат Садиков пулнăран... «Пĕчĕк пахча» тесе алă пусаттăм. Пĕрре çавăн пек алă пуснă заметкăна «Канаш» хаçат редакцинче ĕçленĕ Н.Ваçанкка патне тӳрлетме илсе пырсан, вăл мана: «Мĕншĕн икĕ сăмахлă псевдонимпа çыратăн? Туп пĕр сăмахлă псевдоним», – терĕ. Эпĕ шутласа илтĕм те хамăрăн юнашар ларакан икĕ яла... «Пайраш обществи» тенине астăвах кайрăм... Çакăн хыççăн вара эпĕ чăнах Пайраш пулса тăтăм.

1924-мĕш çулта вулăс центрне – Ишлее – ĕçлеме куçсан... эпĕ вулăсра пулса иртекен ĕçсем çинчен ытларах тата тĕплĕнрех пĕлме пуçларăм[37]. Çавăнпа «Канаш» хаçата та ытларах çырса тăракан пултăм. Унтан тата «Канаш» хаçата халăх хушшине сарас тĕлĕшпе те ытларах ĕçлерĕм. Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕн постановленийĕпе усă курса, мĕнпур арман хуçисене «Канаш» çырăнтарса тухрăм. Çакăншăн «Канаш» хаçат редакцийĕ мана тав турĕ тата, ытти ялкорсене манран тĕслĕх илме сĕнсе, ятарласа статья пичетлесе кăларчĕ.

Чăваш республикинчи корреспондентсен пĕрремĕш конференцийĕ пулса иртнине эпĕ питĕ лайăх астăватăп...[38] Конференци парти обкомĕн аялти залĕнче (халĕ вăл çуртран мăшăрлану керменĕ туса хунă) делегатсем, хавасланса кайса «Интернационал» юрласа янипе уçăлчĕ. Президиума ватă журналистсене П.Львова, Д.Эльмене тата ыттисене суйларĕç. Конференцие парти обкомĕн, Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕн тата профсоветăн представителĕсем саламларĕç. Тĕнчери ларутăру çинчен конференцире парти обкомĕн агитаципе пропаганда пай пуçлăхĕн заместителĕ (кайран вăл «Канаш» хаçат редакторĕ те, рабфак пуçлăхĕ те пулнă) Аркадий Иванович Золотов доклад туса пачĕ. «Канаш» историйĕ çинчен парти обкомĕн секретарĕ Данил Семенович Эльмень каласа пачĕ. «Канаш» хаçата мĕн çинчен тата мĕнле çырасси

çинчен «Канаш» редакторĕ Николай Яковлевич Золотов тунă доклада итленĕ хыççăн, конференци ку тĕлĕшрен ятарласа инструкци йышăнчĕ... Кайранхи çулсенче ялкорсен йышĕ ÿссе пычĕ, ĕçялкорсен съезчĕсем пулса иртрĕç. Вĕсенче те эпĕ кашнинчех делегат пулнă.

1925-мĕш çулхи февраль уйăхĕнче мана, активлă корреспондента, «Канаш» хаçат редакцине ĕçлеме илчĕç. Кунта вара эпĕ чăвашсен паллă писателĕсемпе тата журналисчĕсемпе паллашрăм, туслашрăм. Вĕсенчен вĕренсе, хам та пысăкрах япаласем çырма тытăнтăм. Манăн чи малтанхи «Наçтук» ятлă калав 1927-мĕш çулхи «Çамрăк хресчен» хаçатăн 37–39-мĕш номерĕсенче пичетленнĕ. Ун хыççăн эпĕ тепĕр пьеса пичетлесе кăларнă.

Шупашкара ĕçлеме куççан, хваттер çук пирки, мана пĕр вăхăт «Канаш» хаçат редакторĕ Николай Яковлевич Золотов хăй хваттерĕнче усрарĕ. Ун чухне вăл Симĕс пасар çывăхĕнчи кĕпер патĕнче икĕ хутлă йывăç çуртра пурăнатчĕ... Хваттерте пĕрле пурăннă пирки, паллах ĕнтĕ, эпĕ Николай Яковлевича никамран та ытларах пĕлетĕп. Пĕрре манăн ун çинчен вăл вăхăтра «Канаш» хаçат редакцин ялхуçалăх пай пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ Наум Андреевич Андреевпа (Н.Урхипе) калаçма тÿр килчĕ: «Тĕлĕнмелле вăй-хăватлă çынччĕ вăл, Золотов, – терĕ вăл, – эпĕ халиччен ĕçе ун пек организацилеме пултаракан çын тĕл пулман». Питĕ тĕрĕс çав сăмахсем. Николай Яковлевич «Канаш» хаçат редакторĕ кăна пулман, вăл чăваш писателĕсемпе журналисчĕсене пĕрлештерсе «Канаш» ятлă Союз та (халĕ Чăваш писателĕсен Союзĕ) организациленĕ. Вăлах «Капкăн» журнал редакторĕ те пулнă. Вĕсемсĕр пуçне вăл партипе Совет органĕсем хушнипе темчуль обществăлла ĕç туса пынă.

Н.Золотов хваттерне час-часах А.Михайлов[39], А.Золотов, Н.Шупуççынни çÿретчĕç. Вĕсемпе те вăл чăваш пичетне малалла аталантарасси çинчен калаçса, канашласа ларатчĕ. Вĕренме тăрăшакансене пулăшас шутпа хăй хваттерĕнче вăл, мансăр пуçне, рабфакра вĕренекен шăллĕне тата педтехникум студентне усратчĕ. Çапах тăвăр тесе пĕр сăмах та шарламастчĕ. Н.Золотов ĕçес-çиес тĕлĕшпе те питĕ тирпейлĕччĕ. Çÿрессе Николай Яковлевич питĕ сăпайлă, рабочи тумĕпе çÿретчĕ. Çакна вăл тумланма укçа-тенкĕ çитменнипе мар, ытти ĕçлĕ çынсенчен уйăрăлса тăрас мар



Чăвашсем хушшинче ĕçлекен комсомол тӳри-шарин пĕтĕм Раççейри 2-мĕш канашлăвĕ. Мускав, ВЦИК çурчĕ, 1.10.1929. Пĕррĕмĕш ретре, чи сылтăмра, плащ тăхăннă К.И.Садиков (Пайраш) ларать. Кĕçех çаксенчен нумайăшĕ ялсенче çĕнĕ пурнăç тума пикенеççĕ – колхозсем йĕркелессине хастаррăн ертсе пыма пуçăнаççĕ.

шутпа тунӑ. Ҫырма пултаракан юлташсене Н.Золотов часчасах редакцие чӗнтерсе илсе калаҫатчӗ, вӗсене хавхалантаратчӗ, пичет ӗҫӗнче те ӗҫлесе тӑма ыр сунатчӗ...

Редакци секретарӗ пулса Степан Митрофанович Авксентьев (Лашман писатель) ӗҫлерӗ. Вӑл та мана вӗрентес тӗлӗшрен нумай вӑй хучӗ. Исаев Мӗтрипе вара «Ҫамрӑк хресчен» хаҫатра (вӑл – редактор, эпӗ – секретарь) пӗрле ӗҫленӗ кӑна мар, туслӑ та пулнӑ, хӗрсем патне те пӗрле ҫӳренӗ. Юлашки хут эпӗ ӑна, туберкулез чирӗпе шуралса кайнӑскере, хам Мускавра вӗреннӗ чухне курнӑччӗ...

Хумма Ҫеменӗ тата? Мӗнле манас ӑна? Хам Ишлейре пурӑннӑ чухнех, ҫырма вӗренме тесе, «Рабоче-крестьянский корреспондент» ятлӑ журнал пӗр купа парса янӑччӗ. Хумма Ҫеменӗ аталанса, пиҫсе ҫитнӗ чӑваш писателӗ (вӑл сӑвӑсем те, калавсемпе повеҫсем те, пьесӑсем те лайӑх ҫыратчӗ) пулса вилчӗ. Унӑн пьесисене, нимрен ытла «Анюкпа Ванюка», эпир Ишлейре нумай лартаттӑмӑр. (Ун чухне С.Лашман та пьесӑсем ҫырнӑ, эпир ун пьесисене те лартнӑ).

Хумма Ҫеменӗ 1936 ҫулхи сентябрь уйӑхӗнче вилчӗ. Тӑрук вар-хырӑм чирӗпе чирлесе ӳкнипе ӑна пирӗн Шупашкар больницин хирурги уйрӑмне илсе пычӗҫ... Чӑваш Тӗпӗҫтӑвкомӗ урлӑ телеграмма парса, Етӗрне хулинчи паллӑ хирурга К.Волкова чӗнсе илме шутларӑмӑр. Ун чухне лашапа Етӗрнерен икӗ кун килнӗ. Малтанхи кунхине Калайкассине ҫитсе ҫӗр выртнӑ, тепӗр кунне вара, ир тӑрса, Шупашкара кӑнтӑрла иртсен тин ҫитнӗ... Эпир, Хумма Ҫеменне ҫӑлассине шанса, К.Волков ҫине турӑ ҫине пӑхнӑ пек пӑхрӑмӑр, анчах вӑл, те чир шала кайнӑран, те ун пек чирлӗ ҫынсенчен нумайӑшӗ операци тусан та пурпӗр вилнине шута илсе, аллипе сулчӗ кӑна...

Малтан мана редакцире Иван Мучи помощникӗ туса хучӗҫ. Вӑл ун чухне информаци пайӗн пуҫлӑхӗ пулса ӗҫлетчӗ. Ялтан килнӗ заметкӑсемпе статьясене малтан эпӗ пӑхса тухса тӳрлететтӗм. Кайран, набора ярас умӗн, Иван Мучи юлашки хут пӑхса тухатчӗ... Нумай вӗрентнӗ вӑл мана заметкӑсемпе статьясене мӗнле тӳрлетмеллине.

Пӗр-икӗ сӑмах Иван Мучи[40] хатӗрлесе кӑларакан «Капкӑн» журналӑн ячӗ мӗнле ҫуралса тухни ҫинчен... Ҫак журналӑн ятне панӑ ҫӗре манӑн та хутшӑнма телей килчӗ. «Пӑшатан» – терӗ редактор заместителӗ Г.Алендеев... «Сенӗк» хытӑрах

чикет», – терӗм эпӗ... «Ҫăпата»,.. «Сăпса» тенӗ ят та илтӗнчӗ... Чӳрече умне пырса пăхрăмăр та редакци ҫурчӗ умӗн ун чухнехи пӗтӗм республикипех лайăх та паллă адвокат (унччен вăл артист та пулнă) Иван Андреевич Шевле, сунара ҫӳреме юратаканскер, ҫурăм ҫине капкăнсем ҫакса тултарса, иртсе пынине куртăмăр... Пурте килӗшсе «Капкăнран» ырă ят урăх тупас ҫук, мӗншӗн тесен унта ҫаклансан – каялла тухма хӗн». Чăнах, миҫе ҫул ӗнтӗ эпир тӗрӗс ят хунă «Капкăн» хăй умне лартнă задачăсене чыслăн пурнăҫласа пырать...

Иван Мучинчен хăйӗнчен шӳтлени те пулнă. Пӗррехинче Симӗс пасара сутма пӗр лав катка-пичке тиесе килнӗ, теҫҫӗ. Ҫакна пӗр ҫамрăк ҫын курнă та: «...Акă сире адрес, ҫав адреспа илсе пырсан, пӗтӗмпех илсе юлатпăр». Ҫын, савăнса кайса, катка-пичкине турттарса каять те Иван Мучи хваттерне лекет...

Адрес парса яраканӗ хăй чирлӗ пулсан та ҫын умӗнче яланах савăнăҫлă тытакан тата мыскара туса кăтартма юратакан чăваш писателӗ Илья Тукташ пулнă. Питӗ шел, вăл та, паллă писатель пулса ҫитсен, вăхăтсăр вилчӗ. Иван Мучи ҫак шӳтшӗн Тукташа пӗртте ҫилленмерӗ. Урăхла, Тукташ тем тӗрлӗ мыскара шутласа кăларма пултарнине шута илсе, ăна «Капкăн» ӗҫне ытларах хутшăнтарма тăрăшрӗ. Ҫапăнчӗҫ, ҫапăнчӗҫ вара «Капкăнра» Тукташăн кулăшла сăввисемпе статйисем. Каярахпа вăл «Этем ҫуралчӗ» ятлă роман та ҫырса пӗтернӗччӗ, анчах таҫта ҫухалчӗ ҫав произведени.

Пӗррехинче, ирхине редакцие ӗҫе пырсан, эпӗ хам вырăнта сурăх тирӗнчен ҫӗлетнӗ кӗске кӗрӗк тăхăннă кăтра ҫӳҫлӗ ҫамрăк ҫын ларнине куртăм та хăрасах кайрăм: «Мӗнле, мана кăларса ярас тетӗр-им ӗнтӗ?» – тесе ыйтрăм Иван Мучирен. «Ҫук, редакцире ӗҫлеме вӗренме илнӗ, ҫавăнпа та никам та кăларса яма шутламасть... Чăваш поэчӗ Хусанкай, вăл чăваш писателӗсен съездне килнӗ», – пӗлтерчӗ Иван Мучи. Ҫапла паллашма лекрӗ манăн чăваш халăх поэчӗпе Хусанкайпа, анчах вăл та вăхăтсăр вилсе выртрӗ.

Вăл Мускаври пӗр клиникăра выртнине, унăн чирӗ тарăна кайнипе сывалма май ҫуккине эпӗ ҫав ҫулах (1969-мӗш ҫулта) Кăкшăмра каннă чухне врач-поэтран – Турат Ваҫҫинчен – илтнӗччӗ. Вăл хыпара ун чухне канакан пур писатель те хурланса итленӗччӗ, эпӗ те хама темле йывăр туйнипе вăр-

маналла, шухăша кайса, утрăм. Кайран, Мускавран килсен, чирлĕ Хусанкай пирĕн Республика больницинче выртрĕ. Эпĕ ун патне кашни кун тенĕ пекех кайса çӳренĕ, кăмăлне темчуль та çĕклентерме тăрăшнă. Çавăнпах, тен, эпĕ пынипе вăл яланах кăмăллă пулнă. Ман патăмра унăн вилес умĕн ӳкернĕ сăнӳкерчĕкĕсем халĕ те сыхланса усранаççĕ...




Тавтапуç сире, редакцире пĕрле ĕçленĕ ырă юлташсем, хама, атте пек, тĕрĕс пăхса çитĕнтернĕшĕн, бюрократизма тата ĕçри мĕнпур çитменлĕхсене хирĕç пĕр чарăнмасăр тата парăнмасăр кĕрешме, хама яланах тӳрĕ кăмăллă пулма вĕрентнĕшĕн... Вилнĕ юлташсен Н.Золотовăн, редактор заместителĕ пулнă Г.Алендеевăн, С.Эльгерĕн, Хумма Çеменĕн, Ç.Шăпчăкăн, П.Хусанкайăн, хаçата «Ванюшка» тесе çырса пурăннă хаçат кантурин пуçлăхĕ А.Ивановăн, вăхăтлăх редактор пулнă, пĕр вăхăтра вăл та мана хăй хваттерĕнче усранă... преподаватель П.Григорьевăн тата ыттисен таса та çутă сăнарĕсем яланах ман чĕрере юлĕç. Манăн вĕсене: «Хаклă тусăмăрсем, сирĕн çири йывăр тăпрăр мамăк пек çемçе пултăр», – тесе калас килет.

## Усă курнă литература


1. ЦГА ЧР, ф.334, оп.1, т.3, л.100; т.5, л.49.
2. ИОАИЭ, т. XVIII, Вып. 4-6. Казань. 1898.
3. НА ЧГИГН, отд. II, ед. хр.205, лл.30-32.
4. СНМ-1859.
5. Вускассинче 1929 ç. çуралнă. Садикова (Оленова) Зоя Николаевна (Ком Соййи) 14.11.1996, 31.10.2006, 6.11.2006 калань тăрăх. (малалла: Садикова З.); Риккассинче 1902 ç. çуралнă, 1924 çултанпа Вускассинче (Нӳрек орамĕ) пурăнакан Жирнова Олимпиадăпа 30.11.1982, 24.11.1994, 2.02.1996 калаçнă тăрăх (малалла: Жирнова О.).
6. Садикова З.
7. Вускассинче çуралнă, 1912 çултанпа Яраккассинче пурăннă Чашкина (малтан – Шишкина) Елизавета Александровна (1894-1972) каласа панинчен.
8. ЦГА ЧР, ф.6. оп.8, д.14, л.12.
9. ЦГАОР, ф.99, оп.1, д.161, лл.87, 103; д.233, л.27; ф.1040, оп.1, д.7, л.123-124; д.99, л.129.
10. Вускассинчи (Турикас урамĕ) 60 çулхи Квасова Пăлаки 23.12.1982 каласа панă тăрăх; Садикова З.; ЦГА ЧР, ф.Р-1021, оп.1, д.29, лл.155, 165.
11. Пайраш К.И. Лида йăнăшĕ (калавсемпе пьесăсем). Шуп. 1976, 5-13 с.
12. Хветĕр Уяра çакна çырма 1942 ç. тухнă «Акрамовская война» тĕпчев кĕнеки те хавхалантарнă.

12а. Вăл кун паллă поэт хăйĕн машинипе Зоя Николаевнăна ачипе сыватăшран илсе тухнă. Пайраш Ю.К. сăнӳкерчĕкĕ.

13. Жирнова О.; Садикова З.
14. Садикова З.
15. «Çĕнтерӳ ялавĕ», 16.11.1976; Садикова З.; Пайраш К.И. Лида йăнăшĕ. 1976, 5 с.
16. Çӳлтикассинчи Разумова Мария Васильевна 8.01.2006 каласа панă тăрăх.
17. Садикова З.; Чашкина Е.
18. «Çĕнтерӳ ялавĕ», 12.09.1987.
19. К.И.Пайрашăн килти архивĕ; Садикова З.; Пайраш М.Ю.
20. К.И.Пайрашăн килти архивĕ; Садикова З.; Терентьев А.И. Дорога на погост. Чебоксары: изд-во ЧГИТС. 1998, с.47.
21. Садикова З.
22. «Ялав», 1956, 11 №, 20 с.
23. Никитин (Станъял) В.П. Чувашский рассказ: (1921-1941). Чеб. 1990, с. 91-93.

24. «Чăвашъен», 21.12.1996.

25. «Çĕнтерÿ ялавĕ», 16.11.1976 (çак очерк авторăн 2002 ç. тухнă кĕнекинче те пур).

26. Григорьев А.Г. Юратнă сăнарсем: Статьясем. Шуп. 1980, 70-80 с. (Çак статьях авторăн 1990 ç. тухнă кĕнекинче пичетленнĕ; журналти варианчĕсем «Тăван Атăл» журналта – 1976 ç. тата 1986 ç. пулнă).

27. «Тăван Атăл», 1986, 11 №, 64-65 с.

28. «Çĕнтерÿ ялавĕ», 16.11.1976 (А.П.Данилов çырнă тăрăх).

29. Пĕтĕмĕшле «Чувашское литературоведение и критика: Библиографический справочник. Чеб. 1993». кĕнеке тăрăх; К.И.Пайрашăн килти архивĕ.

30. «Коммунизм ялавĕ», 9.03.1954.

31. Кĕнеке летописĕ. (1918-1928. Чăваш АССР государство библиографийĕ). Шуп. 1960, 71 с; Кĕнеке летописĕ (1929-1938. Чăваш АССР государство библиографийĕн органĕ). Шупашкар. 1964, 211с.; Чăваш АССРĕнче тухнă кĕнекесем, (1951-1960. Библиографии указатателĕ). Шуп. 1988, 115 с.; Чувашское литературоведение и критика (библиограф. указатель). Чеб. 1993, с. 291.

32. «Капкăн», 1966, 23 №.

33. Кĕнеке летописĕ. 1918-1928. Чăваш АССР государство библиографийĕ. Шуп. 1960, 12 с.; Кĕнеке летописĕ (1929-1938. Чăваш АССР государство библиографийĕн органĕ). Шуп. 1964; 10, 34, 37, 39, 43, 47, 54, 56, 71, 82, 89, 99, 109, 120, 147, 154, 161, 229 сс.

34. «Капкăн», 1956, 5 №.

35. Рецензисен летописĕ (1917-1988): Государство библиографи указателĕ. Шуп. 1990; Чувашское литературоведение и критика (биобиблиографический указатель). Сост. А.Н.Тимуков. Чеб. 1993, с. 110, 117, 258, 277, 286.

36. Çыравçă хăйĕн асаилĕвне 1973 çулта çырнă, 23.11.1973-нче пĕтернĕ. «Манăн ÿсĕм» ятлă çак асаилÿ килти хутсем хушшинче упранать, кăштах кĕскетсе ăна юлашки кĕнекинче (Пайраш К.И. Лида йăнăшĕ. Калавсем, пьесăсем. Шупашкар. Ч.к.и., 5-13 с.) кăларнă. Эпир татах кĕскетнĕ.

37. Ишлей ялĕ (с. Ишлей-Покровское), 1920-1927 çç. Шупашкар уесĕнчи Сĕнтĕр вулăсĕн (Сюндырская волость) центрĕ пулнă, çывăхри Мăн Сĕнтĕр ялĕ (с.Большой Сундырь) – Тутаркас вулăсĕн (Татаркасинская волость).

38. Ялкорсен пĕрремĕш форумне хутшăнма 18 çулхи Куçмана вулăс пуçлăхĕ Юлин Ермолай Степанович (катькассисем) ямшăк лашине, хăй тăлăпне парса янă.

39. А.Михайлов – Ананий Михайлович Михайлов-Элтиван (1898-1941), Вăрнар районĕнчи Мăн Явăшран. Ун чухнехи паллă журналист, сăвăç. Кайран Чăваш республикин Совнарком председателĕ, Чулхула крайĕçтăвком председателĕн çумĕ пулнă. [Ялгир П.А. Чăваш литератури энциклопедийĕ. Кÿкеç. 1999, 133 с.]

40 «Хыпар» хаçатăн çав çулсенчи редакторĕ пулнă Н.Я.Золотов «Иван Мучи» тесе алă пусни малтанах коллективлă автора пĕлтернĕ тет («Сов. Чув.», 2.04.1992).

41. «Капкăн», 1956, 5 №.

Кĕнекене хатĕрленĕ чухне тата Вускассинчи Долгов Евгений (1929 ç.ç.), Жирнов Викентий Дмитриевич (1929-2006), Иванова Пелагея Ивановна (1916-2003), Мышев Александр Кириллович (1930-199?), мăнукĕ Пайраш Михаил Юрьевич, Шишкин Геннадий Дмитриевич (1939 ç.ç.), Шишкина Перасковья Демьяновна (1924 ç.ç.) тата ыт. тĕрлĕ çулсенчи асăрхаттарăвĕсемпе усă курнă.

## Тупмалли


Вускасси-Акуча ялĕ .......... 3
Вускассинчи Садиковсен (Сатюхха) ăратти .......... 9
Куçма Пайраш çинчен .......... 16
К.И.Пайраш пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен çырнисем .... 31
Куçма Пайраш кĕнекисем .......... 34
К.Пайраш куçаруçă .......... 36
К.Пайраш рецензет .......... 39
К.Пайраш «Хыпарпа» тантăшĕсем çинчен .......... 41
Усă курнă литература .......... 48

Библиотека Чувашской народной академии

Серия «Мастера чувашской культуры»

Ерагин Евгений Евстафьевич

ПИСАТЕЛЬ И ВРАЧ
КУЗЬМА ПАЙРАШ

На чувашском языке

Художественный редактор *Иванова И.Е.*
Технический редактор *Сорокин А.В.*
Корректор *Иванова Г.Ф.*
Компьютерный набор *Архиповой Т.А.*
Верстка *Михайловой И.О.*

Оригинал-макет издательства «Новое время»

Подписано в печать 15.11.2006.
Формат 60x84/16. Бумага офсетная.
Печать офсетная. Гарнитура Таймс.
Физ. печ. л. 3,25. Тираж 100 экз. Заказ № 144.

Отпечатано в типографии издательства «Новое время».
428034 г.Чебоксары: ул.М.Павлова, 50/1. Тел.: (8352) 41-27-98.

*Чăваш халăх академийĕн вулавăшĕ*